ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 20 ВЫРСАРНИКУН № 15 (8667) Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

Большевиксен партийĕпе Совет государствине тăваканĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе ыран 28 çул çитет.

Ленин ялавĕпе, аслă Сталин çул кăтартса пынипе совет халăхĕ малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне пырать.



Совет халăхĕ Владимир Ильич Ленина хисеплесе асăнать

*

Ленин ячĕ—халăх чĕринче

ЛЕНИНГРАДРА çак кунсенче пиншер ĕçсыннисем В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн Ленинградри филиалне пырса курассĕ. В. И. Ленинăн хваттер-музейĕсене экскурсантсем татти-сыпписĕр пырассĕ. Херсон урамĕнчи 5-мĕш номерлĕ çуртра вырнаçнă музейра витрина çинче мир çинчен йышăннă паллă декретăн тексчĕ пур. Ăна Ленин çав хваттерте 1917 çулта çырнă. Декрета Пĕтĕм Российăри Советсен II-мĕш съезчĕ йышăннă. Курма пыракансем çав витрина умĕнче нумайччен чарăнса тăрассĕ.

ЮЖНО-САХАЛИНСКРА культура дворецĕсенче, клубсенче, библиотекăсенче Ильичăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсене кăтартса паракан выставкăсем уçăлнă. Макароври хут комбинатĕнчи агитаторсем рабочисене совет халăхĕ Ленин ĕçне малалла туса пыракан Сталин юлташ ертсе пынипе питĕ пысăк çитĕнÿсем туни çинчен каласа парассĕ.

ХУСАНТА В. И. Ульянов—Ленин ячĕпе тăракан университетăн актовăй залĕнче 64 çул ĕлĕкрех Владимир Ильич организациленипе студентсен революциллĕ пухăвĕ пулса иртнĕ. Пиллĕкмĕш курсра вĕренекенсем çав актовăй залра «В. И. Ленин—марксистла наукăн корифейĕ» ятлă темăпа лекци итленĕ.

КАЛУГАРИ машинăсем тăвакан заводри çамрăксем Ленинла призыв вăхăтĕнче партие кĕнĕ В. В. Викторов, И. Я. Сливко, В. Г. Горячев тата ытти коммунистсем иртерекен каласусене уйрăмах интересленсе итлессĕ. Çав коммунистсем простой рабочирен производство командирĕсем таран ÿснĕ. Завод халĕ коммунизмăн аслă стройкисем валли хăватлă мотовозсем туса кăларать. Хăйсен предприятийĕнчи тĕслĕхсемпе коммунистсем большевиксен партийĕпе совет халăхĕ И. В. Сталин юлташ ертсе пынипе Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртнине кăтартса парассĕ. (ТАСС).

* * *

В. И. Ленина асăнса ларусем иртересшĕ

Пирĕн Тăван çĕршыв столицинчи ĕçсыннисем, пĕтĕм Совет халăхĕпе пĕрле, большевиксен партине тата Совет государствине тăвакан Владимир Ильич Ленина чĕререн хисеплесе асăнассĕ.

Мускаври заводсемпе фабрикăсенче, учрежденисемпе вĕренÿ заведенийĕсенче агитаторсемпе пропагандистсем Владимир Ильичăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕ çинчен, В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен каласусем иртерессĕ.

Январĕн 18-мĕшĕнче столицăн 13 районĕнче—Ленински, Сталински, Молотовски, Кировски, Коминтерновски, Ленинградски, Тимирязевски, Фрунзенски, Щербаковски, Октябрьски, Пролетарски, Первомайски тата Киевски районсенче В. И. Ленина асăнса ларусем иртернĕ.

Кировски районĕнчи партипе совет, профсоюзпа комсомол организаци представителĕсен ларăвĕнче ВКП(б) Мускав хула комитечĕн секретарĕ И. И. Румянцев юлташ «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» ятлă доклад туса панă. Ленинградски районĕнче пулнă ларура РСФСР Сутĕç министрĕ И. А. Капров юлташ, Фрунзенски районĕнче—Г. Ф. Александров академик, Первомайски районĕнче—Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсене сарас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри общество председателĕн заместителĕ О. А. Хвалебнова юлташ, Щербаковски районĕнче — ВЦСПС секретарĕ И. В. Горошкин юлташ доклад тунă.

В. И. Ленина асăнса иртернĕ ларусен участникĕсем пысăк çĕкленÿпе И. В. Сталин юлташ патне саламлă çырусем янă. (ТАСС).

* * *

КИЕВ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине асăнса ларусем иртерме тытăннă.

Искусство работникĕсен клубĕнче Киеври Ленински районĕнчи ĕçсынни представителĕсен ларăвĕ пулса иртнĕ. КП(б)У райкомĕн секретарĕ Буткевич юлташ «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» ятлă доклад туса панă.

Украина столицинчи Октябрьски тата Печерски районсенче те ларусем иртернĕ.

Кунта Ленин сăмах тухса каланă

ЛЕНИНГРАД, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Киров ячĕпе тăракан заводри пĕр цех стени çине В. И. Ленина асăнса хăма çапса хунă. Ун çинче çакăн пек сăмахсем ылтăн пек çиçессĕ: «Кунта Ленин сăмах тухса каланă...»

1917 çулхи майăн 12-мĕшĕнче нумай пин çын пухăннă путиловецсен митингĕнче пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин сăмах тухса каланă. Унăн хĕрÿллĕ сăмахĕ, рабочисене миршĕн, çăкăршăн, влаçа Советсен аллине парассишĕн чĕнсе каланă сăмахĕ, питĕ хавхалантарнă. Митинг хыççăн рабочисем Ильича автомобиль патне алăпа çĕклесе пынă, унтан ăна Нарва хапхи патне çитиччен ăсатса янă.

Газ ячĕпе тăракан Культура çуртĕнче В. И. Ленин путиловецсен митингĕнче сăмах тухса каланине кăтартса паракан картина çакăнса тăрать. Çак кунсенче вăл картинăна путиловецсем час-часах пырса курассĕ. Заводри ватă рабочисем, Ильич сăмахне итленĕ Кукушкин, Мирошников, Васильев, Фомин юлташсем тата ыттисем те çамрăксене çав нихçан манми кун çинчен каласа парассĕ, çамрăк рабочисене революци ветеранĕ пулса тăракан заводăн мухтавлă традицийĕсене ÿстерсе пыма чĕнессĕ.

Газ ячĕпе тăракан Культура çуртĕнче паян В. И. Ленина асăнса Кировски районĕнчи ĕçсынни представителĕсен ларăвĕ пулнă. ВКП(б) Кировски райкомĕн секретарĕ А. О. Дроздов «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» ятлă доклад туса панă.

Ленинградри ытти районсенче те В. И. Ленина асăнса ларусем пулса иртнĕ.

Кинофильмсем кăтартассĕ

Мускав хулинчи кинотеатрсенче В. И. Ленин çинчен фильмсем кăтартма пуçланă.

Мускав çыннисем «Ленин в Октябре», «Ленин в 1918 году», «Клятва» тата ытти фильмсене çĕнĕрен курассĕ. Çав картинăсем совет киноискусствин ылтăн фончĕ пулса тăрассĕ.

Ленин кунĕсенче столицăри кинотеатрсенче çавăн пекех «Владимир Ильич Ленин» ятлă документальнăй фильм, «Кинодокументы о В. И. Ленине» ятлă кĕске метражлă картина кăтартассĕ. Асăннă фильмсене Владимир Ильич юлашки çулсенче пурăннине кăтартса паракан питĕ паха кинокадрсем кĕртнĕ.

Столицăри экрансем çинче тата çавăн пекех кĕске метражлă фильмсем кăтартассĕ: Разлив, — 1917 çулхи июльте В. И. Ленин унта буржуази хĕсĕрленинчен пытанса пурăннă; Шушенское ялĕнчи В. И. Ленин пÿрт-музейĕ тата ытти те. (ТАСС).

Аслă Ленин хушса хăварнисене пурнăçласа

ТБИЛИСИ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Грузири ĕçсыннисем хăйсен республикине, уйрăмах колхозлă ялсене электрификацилес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемпе мухтанассĕ. Çак çитĕнÿсем аслă Ленин хушса хăварнисене пурнăçлани пулассĕ.

1921 çултах, Грузире Совет влаçĕ туса хунă хыççăн темиçе уйăх иртсенех, В. И. Ленин Кавказри коммунистсем патне «...пуян крайăн производительнăй вăйĕсене, шурă кăмрăка, çĕре шăварассине» вĕçĕ-хĕррисĕр аталантарма кирлĕ тесе çырнă, «тÿрех хресченсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшма тата электрификаци тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума тытăнма» чĕннĕ.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче Грузири тусем çинчи хăвăрт юхакан юханшывсем çинче колхозсем 200 ытла гидроэлектростанци лартнă. Гурджаани районĕ—республикăра тăлкăшпех электрификациленĕ пĕррремĕш район. Çав районти ялсем кăна çулсерен 7—8 миллион киловатт-сехет электроэнерги илсе тăрассĕ.

Грузире ялсенчи электростанцисем паракан электричество вăйĕнчен çуррине яхăн колхоз производствине механизацилеме каять.

Республикăри юханшывсем çинче колхозсем çĕнĕрен вуншар гидроэлектростанцисем тăвассĕ. Чылай районсене тăлкăшпех электрификациленĕ май ялсенче малтанхи энергосистемăсем тума тытăннă.

Ленин çулĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

1924 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче Мускав çывăхĕнчи Горкăра Владимир Ильич Ленин чĕри тапма чарăннă. Владимир Ильич пирĕнтен уйрăлса кайни пирĕн большевиксен партийĕпе совет халăхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемшĕн пысăк çухату пулнă. 28 çул каялла пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем хăйсен ашшĕне, учительне, хăйсен чи лайăх тусне тата хăйсене хÿтĕлекене çав тери пысăк хуйхăпа юлашки çула ăсатнă.

Владимир Ильич Ленин этемлĕхе капитализм чуралăхĕнчен хăтăлмалли, телейлĕ те ырă пурнăç тумалли тĕрĕс çул кăтартса панă. Вăл кăтартса панă çулпа пырса Российăри пролетариат пĕтĕм тĕнче историйĕнче çĕнĕ самана—капитализмлă обществăна пĕтĕмпех тĕп тумалли, ун вырăнне коммунизмлă çĕнĕ общество тумалли самана пуçласа ячĕ. Тĕнче историйĕ çак çулпа—капитализмлă общество пурпĕрех пĕтсе лармалли, коммунизмлă общество тумалли çулпа аталанса пырать.

Ленин, Сталин юлташпа пĕрле ĕçлесе, большевиксен партийĕ—çĕнĕ сăнарлă революциллĕ парти туса хунă. Çакăн пек парти çеç ĕçсыннисене çĕнтерÿ патне илсе çитерме пултарать, тесе вĕрентнĕ Ленин. Вăл вĕрентни тĕрĕс пулнине истори çирĕплетсе пачĕ. Ленинпа Сталин, вĕсем туса хунă коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пирĕн Тăван çĕршыври ĕçсыннисем Октябрьти Социализмлă Аслă революцире çĕнтерчĕç. Ленин Совет государствине—рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕррремĕш государствине туса хунă. Совет государстви çĕнтерÿсем туса пыни пĕтĕм тĕнчери пролетарисемпе ĕçсыннисене капитализм пусмăрĕнчен хăтăлма шанчăк панă, революциллĕ кĕрешÿре хавхалантарса пынă, халĕ те хавхалантарса пырать.

Ленинпа Сталин, вĕсем туса хунă коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пирĕн Тăван çĕршыври халăхсем ют çĕршывсен вăрçăллă интервенцийĕ тата граждан вăрçи çулĕсенче мĕнпур тăшмансене çĕнтерчĕç. Октябрьти Социализмлă Аслă революцире кĕрешсе илнисене сыхласа хăварчĕç, хуçалăха юсаса, вăйлатса пымалли анлă çул çине тухрĕç. Гениллĕ Ленин пирĕн Тăван çĕршыври халăхсене çĕнĕ пурнăç—социализмлă общество тумалли çула кăтартса пачĕ.

Ленин вилнĕ хыççăн ленинизмăн никам çĕнтерейми аслă ялавне Сталин юлташ çÿле çĕклесе малалла илсе пычĕ. Сталин юлташ партие, Совет çĕршывĕнчи мĕнпур ĕçсыннисене ленинизм ялавĕ тавра тачă пĕтĕçтерчĕ. Вăл, ленинизм тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкса, коммунизмшăн кĕрешес ĕçри опыта пĕтĕçтерсе, ленинизм теорине малалла аталантарчĕ.

Совет халăхĕ, Ленин çулĕпе пырса, вăл хушса хăварнисене пурнăçласа, Сталин юлташ ертсе пынипе, социализмлă общество турĕ, хăй тунă çĕнтерÿсене тăшмансенчен сыхласа хăварчĕ—Аслă Отечественнăй вăрçăра фашистла захватчиксене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Совет халăхĕ, Ленин çулĕпе пырса, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ çул кăтартса пынипе, вăрçă хыççăнхи вăхăтра та пысăк çĕнтерÿсем турĕ. Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕ—промышленность, ялхуçалăхĕ, транспорт çултан-çул вăйланса пырассĕ, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Пĕтĕм совет халăхĕ коммунизмăн аслă стройкисене тăвать. Пирĕн çĕршывра наука, культура, искусство чечекленсе аталанса пырассĕ.

Совет халăхĕ коммунистсен партийĕпе аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне тăвать, социализмран майĕпен коммунизма куçмалли çулпа çирĕппĕн малалла пырать. Пирĕн Тăван çĕршыв хăватлă держава пулса тăнн, Совет Союзĕнче халăхсен тăванла семьере тусăл пурăнни пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисене социализмлă обществăра çеç телейлĕ пурнăç пулма пултарнине, социализм чухне çеç мирпе халăхсен туслăхĕ пулма пултарнине кăтартса тăрать. Ленинизм идейисене мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем ытларах та ытларах ăнланса пырассĕ.

Америкăпа Англи империалисчĕсем, капитализма вилĕмрен çăлса хăварас тесе, хăйсен çĕршывĕсенче фашистла диктатура туса пырассĕ, тĕнчере çĕнĕ вăрçă пуçласа яма хатĕрленессĕ. Анчах вĕсен хура ĕçĕ пурпĕрех путланса ларĕ, мĕншĕн тесен капитализмлă çĕршывсенчи ĕçсыннисем капитализм йывăр иккек пулнине, ăна тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе хурсан тин йывăр пусмăртан хăтăлма май пуррине ăнланса пырассĕ.

Ленинизм ялавĕ айĕнче тăрса, мĕнпур çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсем рабочи класа, ĕçсыннисене капитализм пусмăрĕнчен хăтарассишĕн кĕрешессĕ. Колонисенчи халăхсем те империализма хирĕç, ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕве вăйлатассĕ.

Ленинизмăн вилĕмсĕр идейисем халăхсен кĕрешÿ çулне—миршĕн, демократишĕн, социализмшăн кĕрешмелли çула çутатса тăрассĕ. Аслă Совет Союзĕ миршĕн кĕрешес ĕçре тĕнчери халăхсене çул кăтартса ертсе пырать. Совет Союзĕ—пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçăн хăватлă терекĕ.

Ленинизм ялавĕпе халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем чаплă çĕнтерÿ турĕç. Халĕ вĕсем Ленинпа Сталин кăтартса панă çулпа пырса, Совет Союзĕ пулăшнипе, хăйсен çĕршывĕсенче социализм тумалли çулпа шанчăклăн малалла пырассĕ. Ленинизм ялавĕпе аслă Китай халăхĕ çĕнтерчĕ, вăл миршĕн, демократишĕн, социализмшăн кĕрешекен лагерьте çирĕп вырăн йышăнчĕ.

Ленин ялавĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Ленин кунĕсенче

Республикăра çĕршер агитаторсем колхозлă ялсемпе предприятисенче, учрежденисемпе шкулсенче В. И. Ленин пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен каласусем иртерессĕ. Шупашкарти ĕçсыннисем хушшинче Ильич çинчен докладсем иртерме ВКП(б) хула комитечĕ 80 докладчик уйăрнă. Пĕтĕм Союзри политикăпа наука пĕлĕвĕсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн республикăри уйрăмĕ В. И. Ленин çинчен лекцисен циклне иртерет. Çак цикла «В. И. Ленинăн ача чухнехи пурнăçĕ тата вăл революциллĕ ĕçе хутшăнма тытăнни», «В. И. Ленинпа И. В. Сталин—тĕнчери пĕррремĕш социализмлă государствăна тăваканĕсем», «В. И. Ленинпа И. В. Сталин сăнарĕсем—Совет Союзĕнчи халăхсен творчествинче», «В. И. Ленинпа И. В. Сталин сăнарĕсем — изобразительнăй искусствăра», «И. В. Сталин—В. И. Ленин ĕçне малалла туса пыракан аслă гений» ятлă лекцисем кĕрессĕ.

Хуласемпе ялсенчи тата вăрманпромхозсенчи кинотеатрсемпе клубсенче «Ленин в Октябре», «Ленин в 1918 году», «Владимир Ильич Ленин», «Клятва», «Выборгская сторона» тата «Великое зарево» ятлă кинофильмсем кăтартма пуçланă.

Чăваш государство издательстви В. Маяковскин «Владимир Ильич Ленин» ятлă поэмине пичетлесе кăларать.

Вырăс драма театрĕ В. И. Ленинăн çамрăк чухнехи пурнăçĕ çинчен Попов драматург çырнă «Семья» ятлă пьесăна лартса пама хатĕрленет.

Çак кунсенче Шупашкарти картинăсен галлерейине курма пыракансем те нумайланчĕç. Кунта В. И. Ленин çинчен паллă художниксем ÿкернĕ картинăсемпе пĕрлех, чăваш художникĕсен ĕçĕсем те пур. Н. Овчинников художник «Чăваш автономине тăвасси çинчен калакан декрет çине В. И. Ленин алă пусни» тата В. Макаров художник «В. И. Ленин Кукушкино ялĕнчи пĕррремĕш ссылкăра» ятлă пысăк картинăсем ÿкернĕ.

Республикăри парткабинетсемпе библиотекăсенче, клубсемпе вулав çурчĕсенче В. И. Ленин пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсене кăтартакан выставкăсемпе витринăсем йĕркеленĕ.

Максим Горький ячĕпе тăракан библиотекăри выставкăна В. И. Ленинăн чăвашла куçарнă произведенийĕсене пурне те тăратнă.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозри вуламалли залра та Ильич произведенийĕсен выставкине йĕркеленĕ.

Ленин кунĕсене хатĕрленнĕ май, Красноармейски районĕнче Çавал шывĕ çинче районти чи пысăк гидроэлектростанцие туса пĕтерчĕç. Тăвай районĕнчи Чапаев ячĕпе, «Горьковская Коммуна» тата «Сталь» колхозсенче те çак кунсенче Ильич ламписем çутатма пуçлаççĕ.

ЛЕНИНИЗМ ИДЕЙИСЕН ÇĔНТЕРĔВĔ

I.

Владимир Ильич Ленин—пĕтĕм тĕнчери ĕçсынннисен çулпуçĕпе учителĕ, большевиксен партийĕпе Совет государствине тăваканĕ, наукăсен аслă корифейĕ вилнĕренпе 28 çул иртрĕ.

Ленин—пур енлĕ гений. Вăл пĕтĕм тĕнчене витĕр курнă, пурнăçа, çĕр çинчи япаласемпе явленисене тарăн пĕлсе тăнă.

Ленин пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмĕн çĕнĕ опытне, наукăллă шухăшăн мĕнпур аслă çитĕнĕвĕсене творчествăллă пĕтĕçтерсе марксизма малалла аталантарса пуянлатнă, ăна çĕнĕ тата çÿлĕрех пусăма çĕкленĕ. Ленин çырнă «Материализм тата эмпириокритицизм» ятлă чаплă кĕнеке диалектикăллă материализм аталанăвĕнче çÿлĕ тапхăр пуçланнине пĕлтерет. Çакăн хыççăн наука аталанăвĕнче пулса иртнĕ пĕтĕм ĕçсем, физикăра, химире, биологире тунă çĕнĕ открытисем диалектикăллă материализм тĕрĕслĕхне пĕтĕмпех çирĕплетсе пачĕç. Диалектикăллă материализм кăна ку чухнехи естествознанин чăн-чăн философиллĕ никĕсĕ пулса тăрать.

Ленин рабочи класа, марксистла партисене капитализмлă çĕршывсенче пуç пулса тăракан духовнăй реакцие, философиллĕ тĕшмĕшлĕхе, шухăшри ирсĕрлĕхе хирĕç кĕрешме идейăллă аслă хĕçпăшалпа хĕçпăшаллантарчĕ.

В. И. Ленинăн аслă соратникĕ И. В. Сталин хăйĕн гениллĕ философиллĕ ĕçĕсенче—«Диалектикăллă тата историллĕ материализм çинчен», «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă кĕнекисенче тата ыттисенче те марксистла философиллĕ наукăна малалла аталантарнă, ăна тата çÿлĕрех пусăма çĕкленĕ.

Ленин политикăллă экономи енĕпе гениллĕ произведенисем нумай çырнă. Вĕсем хушшинче «Империализм—капитализмăн çÿлти сыпăкĕ» ятлă кĕнеке тĕп вырăн йышăнса тăрать. Çак кĕнеке вăл «Капитала»—марксизмăн тĕп произведенине малалла аталантарни пулать.

Ленин XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче тата XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче империализм тапхăрĕ пуçланнă хыççăн капитализм аталанăвĕнче çĕнĕ закономерноçсем пулса тăнине тарăн анализ тунă. Нумай йышлă фактсемпе усă курса, Ленин монополизмччченхи капитализм пур-пĕрех монополистла капитализм, урăхла каласан—империализм пулса тăрассине никам сирсе ярайми вăйлă логикăпа кăтартса панă. Ленин империализм саманинче капитализмлă стройăн мĕнпур хирĕçĕвĕсем ÿссе, тарăнланса, çивĕчленсе пынине кăтартса панă. Империализм вăл—çĕрекен, вилекен капитализм, социализм умĕнхи самана. Юлашки çулсем хушшинче капитализм аталанăвĕнче пулса иртнĕ ĕçсем Ленинăн çакă наукăллă анализĕ тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕç.

Империализм çĕрсе пыни капитализмăн мĕнпур хирĕçĕвĕсем çивĕчленсе çитнинче: капитализмла монополисем ÿсиинче, вĕсем производительнăй вăйсене аталанма чарса тăнинче, эксплуатаци вăйланнинче, рабочи класс чухăнланса пынинче, класлă хирĕçÿсем тата ытларах вăйланнинче, рабочисен юхăмĕпе нациллĕ-ирĕклĕх юхăмĕ çĕкленнинче, капитализм системинчен çĕнĕрен те çĕнĕрен çĕршывсем тухса ÿкнинче курăнать.

Капитализм ку чухнехи пек йывăр вăхăта пурăнса ирттерни нихăçан та пулман. Çаксем пурте Ленин—«империализм вăл—вилекен капитализм» тесе гениллĕ калани тĕрĕс пулнине кăтартаççĕ.

Ленин капитализм пĕр пек аталанса пыманни çинчен калакан закона уçса пысăк ĕç тунă. Çак закон тăрăх вăл малтанлăха социализм уйрăммăн илнĕ пĕр çĕршывра çĕнтерме пултарасси çинчен калакан хăйĕн гениллĕ теорине туса хатĕрленĕ. Çак аслă теори çине таянса, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан Российĕри рабочи класпа ĕçсынннисем тĕнчери чи пысăк çĕршывсенчен пĕринче капитализм йĕркине пĕтерсе совет влаçĕ, рабочи класс диктатури туса хучĕç, этемлĕх историйĕнче пуçласа эксплуататорсемсĕр пурăнакан государство туса хучĕ.

Социализмлă революци çинчен Ленин туса хатĕрленĕ гениллĕ теорие аслă Сталин ленинизм тăшманĕсенчен сыхласа хăварса малалла аталантарнă. Çак теорие халĕ тивĕçлипех Ленин—Сталин теорийĕ теççĕ. Çак теори çине таянса совет халăхĕ коммунистсен партийĕ, Сталин юлташ ертсе пынипе социализмăн чаплă çуртне туса лартрĕ.

Ленин хăйĕн чи шанчăклă ученикĕпе, тусĕпе, соратникĕпе—Сталин юлташпа пĕрле большевиксен партине—капитализма штурмламалли партие, ленинизм партине туса хунă. Пурнăç, истори практики Ленин рабочи класпа ĕçсынннисем хăйсене чăн-чăн марксистла парти ертсе пырсан кăна çĕнтерÿ тума пултарни çинчен вĕрентни тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕç.

Ленин «Государство тата революци» ятлă вилĕмсĕр произведени çырнă. Çак кĕнекере, çавăн пекех тата вăл çырнă ытти произведенисенче Ленин буржуаллă «демократи», доллар «демократийĕн», рокфеллерсен, моргансен, дюпонсен тата ытти финанс магначĕсен «демократийĕн» суялăхĕпе çĕрĕклĕхне уçса кăтартнă.

Ленинизм вĕрентнĕ тăрăх монополизмччченхи кивĕ капитализмран империализма куçни вăл пур енĕпе те: экономика, социальнăй, политика, культура, идеологи енĕпе наступлени туни пулать.

Политика енĕпе империализмла реакци вăл буржуаллă демократирен террорла диктатурăна, фашизма куçнине пĕлтерет.

«Çĕнĕ экономика тĕлĕшĕнчен, монополистла капитализм тĕлĕшĕнчен (империализм вăл монополистла капитализм пулса тăрать) политикăллă надстройка пулса тăни вăл демократирен политикăллă реакци патне куçни пулса тăрать. Ирĕклĕ конкуренцие демократи çураçуллă. Монополие политикăллă реакци çураçуллă... Тулашри политикăра та, шалти политикăра та империализм демократие пăсма, реакци патне пыма тăрăшать. Çак енчен илсен тавлашмасăрах çапла калама пулать: империализм **«демократие пĕтĕмĕшпе, пĕтĕм демократие хирĕç пыни»** пулать...» (В. И. Ленин, Соч., 23 т., 33 стр.).

В. И. Ленинпа И. В. Сталин Горкăра, 1922 çул.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçиччен шалтипе тулашри политика тĕлĕшĕнчен империалистла реакцин тĕп вырăнĕ: Европăра—гитлерла Германи, Азире—империалистла Япони пулнă. Кунта тата çакна асра тытни кирлĕ: ун чухне те Германи империализмĕн çурăмĕ хыçĕнче США-ри пуç пулса тăракан капиталистла монополисем тăнă. Халĕ империалистла политикăпа идеологиллĕ реакцин тĕп вырăнĕ США-на куçрĕ.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçиччен прогресспа демократие тата социализма хирĕç кĕрешекенсен пуçĕнче гитлерла Германи тăнă пулсан, чи реакциллĕ теорисем çакăнтан тухса тăнă пулсан, Германи, Итали, Япони империализмне çĕмĕрсе тăкнă хыççăн демократипе социализма хирĕç пыракан империалистла реакци пуçĕнче США империализмĕпе унăн партнерĕ—Англи империализмĕ тăрать. США-па Англи расистла, космополитла, мальтусла ирсĕр теорисем саракан вырăн пулса тăчĕç. Англипе Америка империалисчĕсем ку тĕлĕшпе пур енчен те гитлеризм ирсĕрлĕхĕсемпе, кивĕ, чура хуçисем пулма вĕрентекен расистла тĕшмĕшлĕхпе усă кураççĕ. Америка буржуазийĕн идеологиллĕ арсеналĕнче çакнашкал йышши ирсĕрлĕхсем яланах пысăк вырăн йышăннă.

США-ра финанс олигархийĕн уççăнах террорла диктатури, тулашĕнчен илсен, демократиллĕ пÿркенчĕкпе витĕнсе тăрать пулсан та, тĕрĕссипе США-ри хальхи политикăллă режим вăл гитлерла режимран сахал уйрăлса тăрать. Гестапо вырăнне США-ра ФБР (разведка) тата «Американа хирĕçле» ĕçе йĕрлесе тăракан комиссии тенĕскер аскăнать. Халиччен еврейсене хирĕç погромсем тунă пулсан, халĕ Америка куклуксклановецĕсем негрсене Линч сучĕпе вĕлереççĕ. Чи лайăх çынсем, халăх интересĕсемшĕн кĕрешекенсем—компарти руководителĕсем тĕрмесенче лараççĕ. Финансла плутократие хирĕç тăма хăякан прогрессивлă çынсем валли концентрациллĕ лагерьсем туса пĕтерне. Государство аппарачĕнче çар çыннисем пуç пулса тăраççĕ. Экономика вăрçа хатĕрленес енĕпе ĕçлесе тăрать.

Америка империализмĕ США-ра кăна мар тата хăйĕн çĕршывĕн тулашĕнче те политикăллă реакцие пурнăçласа пырать. Вăл тĕнче жандармĕ, палачĕ пулса тăчĕ. Вăл халăхсен нациллĕ суверенитечĕпе демократиллĕ прависене ура айне тăвать.

Империалистла реакцие хирĕç чăн-чăн халăх демократийĕ, совет демократийĕ тăрать. Çак демократие Ленинпа Сталин кăтартса панă тăрăх халăх масси хăй туса хунă.

«Совет стройĕ,—тесе çырнă Ленин,—рабочисемпе хресченсемшĕн чи пысăк демократизм пулса тăрать, çав вăхăтрах вăл буржуаллă демократирен уйрăм тăнине, пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнĕ сăнарлă демократи, шăпах та: пролетариллĕ демократизм е пролетариат диктатури пулса тăнине пĕлтерет» (Сочиненисем, 33 т., 32 стр.).

Советлă социализмлă демократизм вăйланса пыни Совет Союзĕнчи нумай миллионлă массăсен—социализмлă государствăпа коммунизм обществи тăвакан халăхăн пысăк активлăхĕнче палăрса тăрать.

Ленинизм çĕнтерĕвĕ, советлă демократизм çĕнтерĕвĕ Сталинла Конституцире яр уççăн курăнса тăрать. Сталинла Конституци хĕвелĕ айшинче аслă совет халăхĕ телейлĕ пурăнать, ĕçлесе хăйĕн телейлĕ пурнăçне тăвать.

Сталинла Конституцие туса панă Сталин юлташ çапла каланă: «ССР Союзĕн Конституцийĕ капитализмлă çĕршывсенчи халăхсемшĕн кĕрешÿ программи вырăнĕнче тăрать пулсан, ССР Союзĕнчи халăхсемшĕн вăл вĕсен кĕрешĕвĕн итогĕ, вĕсен этемлĕхе хăтарас фронтра тунă çĕнтерĕвĕсен итогĕ пулса тăрать» (Ленинизм ыйтăвĕсем, 11-мĕш кăларăм, 534 стр.).

Европăпа Азири чылай çĕршывсенче халăх демократийĕ туса хуни вăл ленинизмăн аслă идейисем малалла çĕнтерсе пыни пулать. Çак идейăсем тĕнчери пусмăрта тăракан тата эксплуатациленекен халăхсене ирĕклĕхшĕн, демократишĕн, никама пăхăнманлăхшăн, миршĕн, социализмшăн, капитализмла чуралăха хирĕç кĕрешме хавхалантараççĕ.

II.

Совет халăхĕ, социализмлă государство çине таянса, парти хавхалантарнипе, Сталин юлташ ертсе пынипе капитализмла базиса пĕтерсе çĕнĕ, социализмлă базис туса хучĕ. Вăл эксплуататорла класене пĕтерсе социализмлă общество туса хучĕ. Кунта çынна çын эксплуатацилессинче ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ, Ленин кăтартса панă социализмлă принципсене пурнăçа кĕртнĕ: кам ĕçлемест—вăл çимест, кашни—хăй пултарнă таран, кашнине хăйĕн ĕçне кура.

Ĕлĕк техникăпа экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнă çĕршыв халĕ, совет самани вăхăтĕнче, социализмлă пысăк прогресс турĕ. Ленин Октябрьти революци умĕн çапла çырнă: капиталистсемпе помещиксене экспроприациленни «...производительнăй вăйсене гигантла аталанма май парать. Халех ĕнтĕ, капитализм çакă аталанăва мĕн йĕркесĕр чарса тăнине кура, кучухнехи, халех ĕнтĕ техника тунă никĕс çинче нумай малалла кайма пулнине кура эпир шанчăкăн çапла калама пултаратпăр: капиталистсене экспроприацилени этемлĕх обществин производительнăй вăйĕсене гигантла аталантарма май парать» (Сочиненисем, 25 т., 440 стр.).

Совет обществи совет стройĕ çине, социализмлă çĕнĕ производствăллă отношенисем çине, Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ массăсен ÿссе пыракан творчествăллă активлăхĕ çине таянса, производительнăй вăйсене чăннипех гигантла аталантарса пырать. Пирĕн çĕршыв малалла, коммунизм патне пырать.

Атăлпа Днепр çинче, Донпа Аму-Дарья çинче пуçланнă сталинла аслă стройкăсем, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла аслă план, çутçанталăк вăйĕсене ирĕклĕ çынсен влаçне пăхăнтарни—çаксем пурте вĕсем—Ленин **«Коммунизм вăл совет влаçĕ тата пĕтĕм çĕршыва электрификациленни пулать»**, тесе кăтартса панисене пурнăçлани пулса тăраççĕ. Волховстройран Атăл çинчи гигантла электростанцисем патне пыни — çакă вăл социализмлă обществăн производительнăй вăйĕсем пысăк хăватпа аталаннине яр-уççăн кăтартса парать. Çакă аталану вăл Сталин юлташ ертсе пыни тăрăх пулса пырать.

Совет çĕршывĕн халăх хуçалăхĕнче электрификаци мĕн пек пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пынине çак факт лайăх кăтартса парать: 1951 çулта виçĕ миллион киловатт вăй паракан çĕнĕ электростанцисемпе агрегатсем ĕçе кĕнĕ. Ку вăл пилĕк Днепрогэс чухлĕ пулать.

Социализмлă строй капитализмлă стройран малта тăнине кăтартса пачĕ. Социализмлă строй—чи прогрессивлă строй, вăл обществăна пур енчен те аталантарма май парать.

Капитализм аталанăвĕ ĕçсынннисене çаратнипе, тискерле эксплуатациленнипе, ĕçсынннисен пурнăçĕ начарланнипе пулса пырать.

Социализм ĕçсынннисен пурнăçне вĕçĕмсĕр ÿстерсе пырать. Çĕршыв пĕрмаях малалла аталанать. Ĕçсынннисен культурăллă-техникăллă шайĕ ÿсет. Социализм халăх хушшине массăллă сарăлнă ăмăрту пуçласа ячĕ, капитализм таптаса, пăвса, пусмăрласа тăнă халăхсен таланчĕсене çĕнĕ хăватпа çĕклентерчĕ.

Стахановла юхăм—ку чухнехи никам çĕнтерейми хăватлă юхăм, вăл социализмлă ăмăртăвăн пĕрмай малалла аталанса пыракан çÿлĕ форми, вăл—коммунизм тумалли меслечĕ. Стахановецсем ĕç тухăçлăхне куллен ÿстерсе пыраççĕ. Çакă вăл Ленин кăтартса панă тăрăх, апат-çимĕç çителĕклĕ туса пама, коммунизма куçма, çĕнĕ обществăллă строй енчен капитализмлă кивĕ строя çĕнтерме май парать.

Стахановла юхăмра, производство новаторĕсен вĕçĕмсĕр ÿссе пыракан аслă çарĕнче Ленин массăсен социализмлă ăмăртăвĕ çинчен вĕрентни пурнăçа кĕни курăнса тăрать.

III.

Производствăн социализмлă меслечĕ, социализмлă производствăллă отношенисем тата юлташла туслăх çĕнтернĕ никĕс çинче Совет Союзĕнче çĕнĕ, аталанăва малалла илсе пыракан хăватлă вăйсем—совет обществин моралĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, халăхсен туслăхĕ, совет патриотизмĕ пулса тăчĕç тата тĕрекленчĕç.

Ленин рабочисемпе хресченсен союзне куç шăрçине сыхланă пек сыхлама тата тĕреклетме хушса хăварчĕ. Çак союз ÿссе тата тĕрекленсе рабочисен, колхозниксен тата халăх хушшинчен тухнă совет интеллигенцийĕн хăватлă моралĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ. Çак пĕрлĕх вăл производство хатĕрĕсем социализмлă харпăрлăх пулни çинче, совет обществин мĕнпур сийĕсен тĕп интересĕсем пĕр пек пулни çинче, социализмла идеологи, ленинизм идеологийĕ пуç пулса тăни çинче тытăнса тăрать. Экономикăра социализм çĕнтернĕ никĕс çинче, ленинла-сталинла политика, халăхсен туслăхĕпе пĕртанлăх идеологи никĕсĕ çинче совет обществинче мĕнпур нацисемпе халăхсен никам çĕмĕреймн тăванла туслăхĕ ÿссе тĕрекленчĕ.

Совет Союзĕ вăл интернационализмăн ленинла идеологине материаллă тата политикăллă ĕçсем енчен пурнăçа кĕртни пулать.

США-ра, Англире тата ытти капитализмлă çĕршывсенче тискер кайăкла империализмпа расизм шухăшĕсене сараççĕ пулсан, Ленин—Сталин партийĕ социализмлă интернационализмăн аслă ялавне, мĕнпур расăсемпе нацисен тата халăхсен туслăхĕпе пĕртанлăх ялавне çÿле çĕклерĕ.

Çакă идеологи çине таянса Совет государствин хăй пуçланнă малтанхи кунсенчен тытăнса мĕнпур халăхсем хушшинче мирпе туслăх тăвас политика, вăрă-хурахла вăрçăсене хирĕç, вăрçă чĕртекен мĕнпур ирсĕр çынсене хирĕç кĕрешмелли политика тытса пырать.

Миршĕн кĕрешекенсен ку чухнехи хăватлă юхăмĕ тĕнчери тĕрлĕ политикăллă тата идеологиллĕ çынсене пĕрлештерсе тăрать. Ленинизм идеологине çÿле çĕкленĕ коммунистсем пур çĕрте те, пур чухне те вăрçа чĕртекенсене хирĕç, миршĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче пыраççĕ.

Аслă Сталин çапла каланă:

«Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хÿтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕрекленĕ. Вăрçă пуçаракансем халăх массисене суйса пăтраштарма, вĕсене улталама тата вĕсене тĕнчери çĕнĕ вăрçа хутшăнтарма май тупсан, вăрçă пулма пултарать.

Çавăнпа та мире сыхласа хăварассишĕн пыракан анлă кампани, вăрçă пуçаракансен киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăлармалли хатĕр пулса, халĕ чи малти вырăнта тăрать».

СССР—социализм çĕнтернĕ, ленинизм çĕнтернĕ çĕршыв, тĕнчери мир ĕçĕн хăватлă никĕсĕпе тĕрекĕ пулса тăрать.

Тĕнчери халăхсем СССР çине, хăйсен шанчăкĕ вырăнне хурса, мирпе телей патне илсе пыракан çăлтăр çине пăхнă пек пăхаççĕ.

Ленин совет çыннисене ирĕклĕ совет Тăван çĕршывне юратма, унăн вăйĕсене тĕреклетме, ăна чечеклентерме, ăна социализм тăшманĕсенчен сыхласа хăварма вĕрентнĕ.

Ленинпа Сталин вĕрентĕвĕ совет халăхне мăн кăмăллă пулма, совет патриотизмне вăйлатма воспитани параççĕ.

Ленинпа Сталин çапла вĕрентеççĕ: аслă вырăс халăхĕ, вырăс рабочи класĕ тунă аслă ĕçсем чĕрене «революциллĕ нациллĕ мăн-кăмăллăх туйăмĕ» кĕртеççĕ, «çакă вăл сăртсене çавăрттарма пултарать, тĕлĕнмелле ĕçсем тума пултарать» (Сталин, сочиненисем, 13 т., 25 стр.).

Коммунистсен партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ совет халăхне хăйсен Тăван çĕршывне, ленинизм ĕçне чĕререн юратма, советлă патриотизма ÿстерсе пыма вĕрентеççĕ.

IV.

Социализм çĕнтерни, социализмла идеологи, ленинизм идеологийĕ çĕнтерни совет халăхĕн çĕнĕ духовнăй сăн-сăпатĕнче палăрса тăрать.

Сталин юлташ «Наци ыйтăвĕ тата ленинизм» ятлă произведенире çапла çырать: социализмла революци хыççăн, совет стройĕ çирĕпленнĕ хыççăн, ССР Союзĕнче кивĕ, буржуаллă нацисен никĕсĕ çинче çĕнĕ, социализмлă нацисем пулса тăчĕç, çак социализмлă нацисен духовнăй тата социальнă-политически сăн-сăпачĕ пĕтĕмпех çĕнĕ. «Çак çĕнĕ нацисем капитализма пĕтернĕ хыççăн, кивĕ, буржуаллă нацисен никĕсĕ çинче, вĕсене тĕпренех социализмла улăштарса çĕнетнипе пуçланса аталаннă» (Сталин, Соч., II т., 339 стр.).

Ку вăл политика, экономика тата культура енĕпе питĕ пысăк улшăнусем пулнă май, совет халăхĕн пĕтĕм сăн-сăпачĕ социализмла улшăнса çĕнелнине пĕлтерет.

Социализмлă нацисем тата çак нацисенчен тăракан совет халăхĕ советлă политикăллă строй условийĕсенче, социализмла производство отношенийĕсен никĕсĕ çинче пулса тăнă. «Рабочи класпа унăн интернационалистла партийĕ çак çĕнĕ нацисене тĕрек парса тăракан тата ертсе пыракан вăй пулса тăраççĕ» (Сталин, Соч., II т., 339 стр.).

Мораллĕ-политикăллă пĕрлĕх, халăхсен, мĕнпур расăсен туслăхĕпе пĕртанлăхĕ, интернационализм, империализма тата халăхсене пусмăрланипе ылханни, пур халăхсем те мирлĕ пурăнччăр тесе тăрăшни, империализма хирĕç кĕрешни—çакăн пек çĕнĕ социализмлă нацисен тĕп паллисем.

Пĕтĕм совет халăхĕн çак тĕп паллисем пур. Коммунистсен партийĕ, ленинизм идеологийĕ тăрăх, совет халăхне çавăн пек пулма воспитани панă.

Пирĕн аслă халăх, социализм туса çитерне, коммунизм туса пыракан халăх çак ĕçре революциллĕ пысăк сулăмлăхпа тата большевикла ĕçчеплĕхпе, пысăк хăватпа ĕçлесе пырать. Совет халăхĕн уçăмлă ăс-тăн, çирĕп кăмăл тата чăтăмлăх пур, вăл ĕççене тĕплĕ тăвать. Вырăс халăхĕн, ССР Союзĕнчи халăхсен çемйинче ертсе пыракан вăй пулса тăракан халăхăн, çав тĕп паллисем совет çыннисен духовнăй сăнсăпачĕн тĕп паллисем пулса тăчĕç.

Аслă совет халăхĕ ытти халăхсене хисеплет, вĕсемпе мирлĕ, туслă пурăнма тăрăшать, социализмлă Тăван çĕршывăн тăшманĕсене чунтан ылханать, Тăван çĕршыва сыхлама хатĕр тăрать тата ăна сыхлама пĕлет, Ленин—Сталин ĕçне, коммунизм ĕçне чунтан-чĕререн юратса туса пырать.

Социализмлă общество, коммунизмăн гениллĕ зодчийĕ аслă Сталин ертсе пынипе, майĕпен коммунизма куçас ĕçе пурнăçласа пырать. Производительнăй вăйсене тата социализмлă производство отношенийĕсене малалла аталантарса пыни социализмран коммунизма куçмалли материальнăй никĕс пулса тăрать. Социализмран коммунизма куçассине пурнăçлама производительнăй вăйсене хăвăрт малалла аталантарни кирлĕ, коммунизмăн сталинла аслă стройкисем производительнăй вăйсене хăвăрт аталантарма май параççĕ.

Социализмлă государствăн хăватне малалла тĕреклетсе пыни—коммунизма куçма кирлĕ паха условИ. Çапла вĕрентет пире Сталин юлташ—Ленинăн аслă соратникĕ, унăн ĕçне малалла туса пыракан, пирĕн çулпуçăмăрпа учителĕмĕр. Вăл, аслă Сталин, пирĕн çĕршыва мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтермелли çулпа илсе пычĕ, вăл аслă ертсе пынипе пире аслă çĕнтерÿсем тума—шалти тата тулашри тăшмансене çĕнтерме май пачĕ.

Çынсен ăс-тăнĕнче тытăнса юлнă капитализм юлашкисене пĕтересси—социализмран коммунизма куçассине пурнăçлама кирлĕ паха условИ. Националистла сулăнчăксен юлашкисем те капитализмăн çавăн пек сиенлĕ юлашкисем пулса тăраççĕ. Тăшман—капитализмлă йĕритавралăх—чи малтан национализм юлашкисене чĕртсе яма тăрăшать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе аслă Сталин пирĕн партие: малашне те совет халăхне ленинизм идеологийĕпе, интернационализм хăвачĕпе воспитани парса пыма вĕрентеççĕ.

* * *

Американри реакциллĕ философ Дьюи 50 çул каялла «чи лайăх ăслă» çынсем те лару-тăру хальхи вăхăтри пек пулса тăрассине курма пултараймаn, тесе нăйкăшать. Дьюи хÿйхăрса çапла палăртать: истори вĕсем шутласа хунă çулпа мар, пĕтĕмпех вĕсем шутланине хирĕçле çулпа пырать.

Ку вăл урăхла пулма та пултараймасть. Ленин, буржуази идеологĕсене, Дьюи пек идеологсене, асра тытса,—тĕпсĕр шырлан умĕнче тăракан çын малаллине курма, малашне мĕн тумаллине тĕрĕс тавçăрса илме пултараймасть, тесе каланă.

Рабочи класс, марксистла партисем истори шăпах та Марксна Энгельс, Ленинпа Сталин малтанах курса каланă çулпа аталанса пынишĕн тивĕçлипех савăнаççĕ. Эпир пурăнакан ĕмĕрте пур çулсем те коммунизм патне илсе пыраççĕ. Социализмпа халăх демократине никам та çĕнтерме пултараймаççĕ. Хальхи самана вăл—капитализм ишĕлсе пыракан самана, ленинизм идейисем чаплă та питĕ пысăк çĕнтерÿсем туса пыракан самана.

Ленинизмăн никам çĕнтерейми ялавĕ айĕнче тăрса, коммунистсен партийĕ, аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ çирĕп утăмпа коммунизм патне малалла пырать.

Ф. КОНСТАНТИНОВ.

В. И. ЛЕНИН МУЗЕЙĔ

В. И. ЛЕНИН ӖҪ ТУХӐҪЛӐХӖ ҪИНЧЕН

I.

Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ коммунизмлӑ общество тӑвать.

Коммунизмӑн материально-техникӑллӑ никӗсне хывас ӗҫре продукци хисепӗ тӗлӗшпе кӑна мар, продукци пахалӑхӗ енӗпе те ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗрмаях ӳстерсе пыни тӗп вырӑнта тӑрать.

Кашни общество стройӗн кун-ҫулӗ ӗҫ тухӑҫлӑхӗнчен килет, тесе шутланӑ В. И. Ленин. Мӗншӗн капитализм феодализма ҫӗнтернӗ?—ыйтнӑ В. И. Ленин. Вара ҫапла ответ панӑ: мӗншӗн тесен, капитализм крепостной йӗрке чухнехинчен чылай пысӑкрах ӗҫ тухӑҫлӑхӗ тунӑ. Социализм ҫӗнӗ, капитализм чухне пулман ӗҫ тухӑҫлӑхӗ туса, капитализма татӑклӑнах ҫӗнтерет. «Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ вӑл, юлашки шутран, ҫӗнӗ обществӑллӑ строй ҫӗнтерес ӗҫре чи кирли, чи тӗп вырӑнта тӑраканни... Коммунизм вӑл—ирӗклӗ, ӑнлануллӑ, пӗрлешнӗ, лайӑх техникӑпа ӗҫлекен рабочисен капитализм чухнехинчен ҫӳлте тӑракан ӗҫ тухӑҫлӑхӗ» (В. И. Ленин. Соч., XXIX т., 394 стр.).

Совет влаҫӗн малтанхи кунӗсенчех В. И. Ленин парти умне, совет халӑхӗ умне ҫакӑн пек задача лартрӗ: ӗҫе ҫӗнӗлле, социализмла организацилемелле, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелле, ӗҫӗн ҫӗнӗ, социализмла дисциплинине тумалла, социализмлӑ ӑмӑрту организацилемелле.

Ҫак задачӑна татса пама йывӑр тата вӑхӑт та сахал мар кирлӗ, анчах Совет влаҫӗн ӑна татса пама кирлӗ условисем пурте пур, тесе кӑтартса панӑ В. И. Ленин.

«Совет влаҫӗн черетри задачисем» ятлӑ генилле произведенире В. И. Ленин социализм тумалли калама ҫук аслӑ программа кӑтартса панӑ. Вӑл шӑпах ӗнтӗ ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене аталантармалли программа пулнӑ. «Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстересси,—тесе ҫырнӑ Владимир Ильич,—чи малтан, шултра индустрин пурлӑх никӗсне: топливо, тимӗр, машиностроени, хими промышленность производствине аталантарма хушать» (Соч., XXVII т., 228 стр.).

Российӑн ҫутҫанталӑк пуянлӑхӗсемпе запасӗсем калама ҫук нумай пулни, вӗсемпе ҫӗнӗ техникӑпа ӗҫлесе усӑ курни производительнӑй вӑйӗсене нихҫан пулман хӑвӑртлӑхпа малалла яма, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме май парать, тесе кӑтартса панӑ В. И. Ленин. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли тепӗр услови вӑл—халӑх вӗренни тата унӑн культури ӳсни пулать, тенӗ Ленин.

Ленин, ирӗке тухнӑ халӑхӑн пултаруллӑ вӑйӗсене ҫирӗп шанса, буржуалла йӗркесене ырлакан, Совет влаҫне пула халӑх хушшинче ҫутта тухас хӑватпа пуҫаруллӑх ҫӗкленнине ӑнланма пултарайман ҫынсене ҫав тери хытӑ критикӑланӑ. Ҫӗршыв экономикине ҫӗклемелли условисем «тата ӗҫҫыннисен дисциплинине, ӗҫлеме пӗлнине, ӗҫри хӑвӑртлӑха, тӑрӑшнине ӳстересси, ӗҫе лайӑхрах организацилесси пулать»,—тесе шутланӑ Ленин (ҫавӑнтах).

Ленинӑн ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ҫинчен калакан аслӑ идейисене Сталин юлташ малалла аталантарнӑ.



В. И. Ленин «Правда» вулать (1920 ҫул).

II.

Коммунизма куҫма кирлӗ ӗҫ тухӑҫлӑхӗн хисепне ҫитме партипе Совет государствин, В. И. Ленинпа И. В. Сталин кӑтартса панӑ тӑрӑх, пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗн техникине хӑватлӑн ҫӗклемелле пулнӑ.

Сталин юлташ ертсе пынипе совет халӑхӗ пирӗн ҫӗршывра техникӑлла революци турӗ, халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсене те социализмла улӑштарса ҫӗнетрӗ. Ҫапла вара пирӗн ҫӗршывра чи лайӑх индустри, ку чухнехи малта тӑракан техникӑпа ӗҫлекен чи шултра, социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ тунӑ.

Социализмӑн материально-техникӑллӑ никӗсӗ ҫинче хӑватлӑ стахановла юхӑм ӳссе сарӑлчӗ, вӑл тӗнчене тӗлӗнмелле, пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхне кӑтартса пачӗ. «Стахановла юхӑм ҫӗнӗ техникӑпа ним уйрӑлми ҫыхӑнса тӑрать,—тесе кӑтартса пачӗ Сталин юлташ,—ҫӗнӗ техникӑсӑр, ҫӗнӗ заводсемпе фабрикӑсемсӗр, ҫӗнӗ оборудованисӗр пирӗн стахановла юхӑм пуҫланса кайма пултарайман пулӗччӗ» (Ленинизм ыйтӑвӗсем, 11-мӗш издани, 500 стр.).

Социализмлӑ ӗҫ тухӑҫлӑхӗн аталану диалектики ҫакӑн пек: ӗҫ пӗрмаях ҫӑмӑлланса пырать, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ вара пӗрмаях ӳссе пырать. Ҫӗршыва электрификацилес ӗҫе пур енӗпе те аталантарса пырса кӑна, производствӑна механизациленӗ тата автоматизациленӗ никӗс ҫинче кӑна ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла ӳстерме, ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене малалла аталантарма пулать.

В. И. Ленин социализмлӑ совет стройӗ ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене ҫав тери хӑватлӑн малалла аталантарма, эксплуатаци сӑнчӑрӗсенчен ирӗке тухнӑ совет ҫыннисен ӗҫ тухӑҫлӑхне нихҫан пулман хисепе ҫитерме пултарнине витӗр курса тӑнӑ. Пирӗн ҫӗршывра коммунизмӑн материально-техникӑллӑ никӗсне ӑнаҫлӑн туни Ленин малашнехине генилле курса каланӑ сӑмахсем пӗтӗмӗшпех тӗрӗс пулнине кӑтартса пачӗ: «..хӑвӑрт, чӑнахах, чӑн-чӑн массӑпа, халӑхӑн ытларах пайӗ, унтан вара пӗтӗм халӑх хутшӑннипе малалла кайса пырасси социализм чухне кӑна пуҫланать». (Соч., XXV т., 443 стр.).

Коммунизмӑн малтанхи фазинчи ӗҫ тухӑҫлӑхӗн шайӗ коммунизмӑн ҫӳлти фазипе куҫсан ӗҫ тухӑҫлӑхне тата хӑватлӑн ӳстерме кирлӗ никӗс пулса тӑрать.

Сталин юлташ 1946 ҫулхи февралӗн 9-мӗшӗнче суйлавҫӑсем умӗнче тухса каланӑ сӑмахра коммунизма куҫма кирлӗ производство аталанӑвӗн шайне наукӑлла кӑтартса пачӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗк ҫуллӑх плана срокчен тултарни коммунизм ҫулӗ ҫинчи ҫӗнӗ, пысӑк утӑм пулчӗ. Рабочисемпе хресченсем чи лайӑх техникӑпа ӗҫленине, вӗсен квалификацине ӳстернипе пула совет халӑхӗ ҫӗнӗ, пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. 1950 ҫулта ӗҫ тухӑҫлӑхӗ промышленноҫра вӑрҫӑчченхи хисепрен 37 процент ӳснӗ, иртнӗ ҫул ӗҫ тухӑҫлӑхӗ татах 10 процент ӳсрӗ. Промышленность продукци ӳсӗмӗн виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳснинчен килнӗ.

Йывӑр индустрире тунӑ ҫитӗнӳсем ӗҫе механизацилеме тата производствӑна автоматизацилеме май пачӗҫ. Ҫӗр кӑмрӑкӗ, торф кӑларас ӗҫсене тата халӑх хуҫалӑхӗн ытти чылай отраслӗсене механизацилени енчен Совет Союзӗ тӗнчере чи малти вырӑнта тӑрать. Ҫакӑ ӗнтӗ ӗҫ тухӑҫлӑхне вӗҫӗмсӗр ӳстерсе пыма, сывлӑхшӑн йывӑр та сиенлӗ профессисене пӗтерме май парать. Социализмлӑ обществӑра ӗҫҫынни машина пайӗ мар, машина хуҫи пулса тӑрать, вӑл машинӑна алла илсе, машина мӗн пама пултарнине унтан пӗтӗмпех илет. Техникӑна вӗренсе ҫитсе, совет ҫыннисем производство хӑвӑртлӑхне, хӑйсен ӗҫӗн тухӑҫлӑхне ӳстерчӗҫ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ социализм условийӗсенче техника тӗлӗнмелле ӗҫсем тӑвать.

Техникӑна вӗренсе ҫитнипе хӑвӑрт ӗҫлекенсен юхӑмӗ уҫҫӑн кӑтартса парать.

Мухтава тухнӑ хӑвӑрт ӗҫлекен токарь П. Быков вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗкҫуллӑхӑн тӑватӑ ҫулӗ хушшинче 23 ҫулталӑк нормине тултарнӑ. Вӑл метала нихҫан пулман хӑвӑртлӑхпа касать. Америка корреспонденчӗ: «Сирӗн рекорд пӗтӗм тӗнчери рекорд пулӗ?»—тесе ыйтсан, Быков юлташ ҫапла ответленӗ: Америкӑра е Англире кам та пулсан ҫавӑн пек хӑвӑрт ӗҫлени ҫинчен эпӗ илтмен те, хаҫатсенче те вуламан,—тенӗ.

— Совет Союзӗнче ҫавӑн пек хӑвӑрт ӗҫлекенсем нумай-и?—тесе ыйтнӑ корреспондент.

— Вуншар пин.

Ҫакӑ вӑл пирӗн рабочи класӑн культурӑпа техника шайӗ ӳснине, производствӑра чи лайӑх техникӑпа усӑ курнине кӑтартса парать.

Социализм стройӗнче электрификаци чӑнахах этеме тивӗҫлӗ ӗҫ условийӗсем туса парать, миллионшар рабочисене сӗрӗмрен, тусантан, тасамарлӑхран хӑтарать, предприятисене таса, ҫутӑ, чӑнахах этеме тивӗҫлӗ лабораторисем туса хурать, ҫакӑ вара ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑватлӑн малалла ӳстерме май парать, тесе вӗрентнӗ В. И. Ленин.

Социализмлӑ техникӑлла реконструкци хӑех йывӑр, тухӑҫсӑр ӗҫсене квалификациллӗ, пысӑк тухӑҫлӑ ӗҫпе улӑштарса пырать. Квалификациллӗ ӗҫ профессийӗсем ҫултан-ҫул ӳссе пыни ҫакна уҫҫӑнах кӑтартса парать.

Коммунизмӑн сталинла аслӑ стройкисем производствӑна механизацилес тата электрификацилес ӗҫ малашне мӗнле пулса пырассине, малашне ӗҫ тухӑҫлӑхӗ мӗнле аталанса пырассине кӑтартса параҫҫӗ. Вӗсем ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене ҫӗнӗ, ҫӳлӗ пусӑма ҫӗклесе, коммунизмӑн материально-техникӑллӑ никӗсне тӑвас ӗҫре пысӑк утӑм пулса тӑраҫҫӗ.

III.

Халӑх пӗлӳлӗхӗ тата культури ӳсни ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме чи кирлӗ услови пулса тӑрать, тесе шутланӑ В. И. Ленин.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци, кивӗ йӗркене—эксплуататорла классене кӑна вӗренме, культурӑн мӗнпур ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ курма май панӑ йӗркене пӗтерсе, мӗнпур ӗҫҫыннисене хӑйсен культура шайне ӳстерме кирлӗ условисем туса пачӗ.

1939 ҫулта, культура строительствинчи ҫитӗнӳсене кӑтартса парса, Сталин юлташ ВКП(б) XVIII-мӗш съездӗнче ҫапла каларӗ: «Халӑхӑн культура аталанӑвӗ енчен илсе пӑхсан, отчетлӑ тапхӑр чӑнниех культурӑллӑ революци тапхӑрӗ пулчӗ» (Ленинизм ыйтӑвӗсем, 11-мӗш издани, 587 стр.).

Съезд калама ҫук пысӑк ҫӗнӗ задача: «....хуларипе ялти мӗнпур ӗҫҫыннисен культура шайне чылай ӳстерес» задача кӑларса тӑратрӗ. Ҫакӑ халӗ ӑнаҫлӑн пурнӑҫа кӗрсе пырать. 1950 ҫул вӗҫӗнче пуҫламӑш шкулсенче, ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсемпе вӑтам шкулсенче, техникумсенче тата ытти специальнӑй шкулсенче 37 миллион ҫын, аслӑ шкулсенче 1.247 пин студент вӗреннӗ. 1946—1949 ҫулсенче ремесленнӑй училищӗсенчен, чугун ҫул шкулӗсемпе фабрика-завод шкулӗсенчен 3 миллион ҫамрӑк рабочи вӗренсе тухнӑ. Ҫав вӑхӑтрах производствӑра 24,3 миллион ҫын хӑйсен квалификацине ӳстернӗ.

Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗ, халӑх хушшинчен тухнӑ тата халӑха чунтан парӑнса ӗҫлекен совет интеллигенцийӗ ӳссе ҫитӗнчӗ. Вӑл партипе Совет государствин историллӗ задачӑна—мӗнпур рабочисемпе мӗнпур хресченсене культурӑллӑ та вӗреннӗ ҫынсем тӑвас задачӑна пурнӑҫлама пулӑшса тӑрать. Пирӗн ҫӗршывра ҫамрӑксем пурте вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ ҫынсем пулас вӑхӑт инҫе мар ӗнтӗ, ҫакӑ вара ӗҫ культурине малалла ӳстерме май парать.

Социализмлӑ обществӑра ӗҫҫыннисем физически ӗҫе ӑс-тӑн ӗҫӗпе пӗрлештерме, техникӑна тата ӗҫе организацилессине пӗрмаях лайӑхлатса пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Социализмлӑ ӗҫ вӑл физически ӗҫ кӑна мар, ӑс-тӑн ӗҫӗ те пулса тӑрать, вӑл ҫӗнӗ шухӑшсем кӑларса тӑратать, творчествӑллӑ пуҫарулӑха вӑйлатса пырать.

Сталин юлташ, стахановла юхӑмӑн историллӗ пӗлтерӗшне ҫутатса парса, ҫак юхӑм пирӗн рабочисемпе хресченсен культурӑпа техника шайӗн ӳсӗмӗпе уйрӑлми ҫыхӑнса тӑнине кӑтартса пачӗ. Камсем вӗсем стахановецсем? Вӗсем «культурӑллӑ тата техникӑна пӗлекен ҫынсем, ӗҫре ҫыпӑҫулӑхпа йӗркелӗх тӗслӗхӗсене паракан, ӗҫре вӑхӑт факторне хаклама пӗлекен, вӑхӑта минутсем тӑрӑх ҫеҫ мар, секундсем тӑрӑх та шутлама вӗреннӗ ҫынсем. Вӗсенчен нумайӑшӗ техникӑллӑ минимум текеннине вӗреннӗ тата хӑйсен техникӑллӑ пӗлӗвӗсене малалла ӳстерсе пыраҫҫӗ» (Ленинизм ыйтӑвӗсем, 11-мӗш изд., 496 стр.). Сталин юлташ стахановла ӗҫ ӑс-тӑн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи хире-хирӗҫлӗхе пӗтермелли ҫул, наукӑпа практика хушшинчи уйрӑмлӑха пӗтермелли ҫул пулса тӑнине кӑтартса пачӗ. Наукӑпа производство пӗр-пӗрин патне ҫывхарнине пирӗн ҫӗршывра сарӑлса кайнӑ патриотла юхӑм—наукӑпа практика ҫыннисен творчествӑллӑ туслӑхӗ кӑтартса парать, ҫакӑ вӑл техникӑна малалла аталантарма, ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пыма пулӑшать.

IV.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци этемлӗх историйӗнчи ӗҫ формисен аслӑ улшӑнӑвне: эксплуататорсемшӗн ӗҫленӗ пусмӑрти ӗҫрен ирӗклӗ ӗҫе куҫнине пӗлтерет, тенӗ В. И. Ленин.

Ӗҫ формисен ҫак улшӑнӑвӗ хӑй тӗллӗн пулман, вӑл стихийӑллӑ, партипе Совет государстви ертсе тата организацилесе пымасӑр, ӗҫҫыннисем активлӑ, творчествӑллӑ хутшӑнмасӑр, кивӗ стройӑн вӑйӗсене хирӗҫ, капитализм стройӗнчен юлнӑ йӑласене хирӗҫ массӑсем хӑйсем кӗрешмесӗр пулма пултарайман.

Капитализмлӑ обществӑра этемӗн ӗҫӗ-хӗлӗ харпӑр хӑй интересӗ ҫинче тытӑнса тӑрать. Унта, тенӗ В. И. Ленин, ылханлӑ правило тӑрӑх ӗҫлеҫҫӗ: «Кашни хӑйшӗн, пӗр турӑ ҫеҫ пуриншӗн те», теҫҫӗ.

«Эпир ҫапла ӗҫлӗпӗр,—тесе кӑтартса панӑ В. И Ленин,—«пурте пӗриншӗн, пӗри пуриншӗн те» текен правилӑна, «кашнинчен унӑн пултарулӑхне кура, кашнине ӑна кирлине кура» текен правилӑна массӑсен ӑнланӑвне, хӑнӑхӑвне, кулленхи йӑлине кӗртсе пырӑпӑр, майӗпе, анчах пӗрмаях коммунистла дисциплинӑпа коммунистла ӗҫе пурнӑҫа кӗртсе пырӑпӑр» (Соч., 31 т., 103 стр.).

Социализмлӑ революци ҫӗнтерни, пирӗн ҫӗршывра социализм ҫӗнтерни ӗҫе хавхалантаракан халиччен пулман майсем, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерекен ҫӗнӗ майсем пачӗҫ.

«Рабочисем капиталистсем валли мар, хӑйсен государстви валли, хӑйсен класӗ валли ӗҫленине ӑнланса илни,—ҫакна ӑнланса илни пирӗн промышленноҫа малалла аталантарса, лайӑхлатса пыракан калама ҫук пысӑк вӑй пулса тӑрать» (И. В. Сталин. Сочиненисем, 10 т., 119 стр.).

Социализм ӗҫӗн характерӗпе условийӗсене тӗпренех улӑштарчӗ. Пирӗн ҫӗршывра ӗҫе пӗтӗм государствипе организацилесе, планласа пыраҫҫӗ. Ҫак условисенче пӗччен ҫын ӗҫӗ пӗтӗм халӑх ӗҫӗн пӗр пайӗ пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та социализмра кашни ҫын ӗҫӗ тӳрех обществӑшӑн тунӑ ӗҫ пулать, кашни ҫын, Сталин юлташ каланӑ пек, хӑйне евӗрлӗ обществӑллӑ деятель пулса тӑрать. Социализмра общество пуянлӑхӗ ӳсни ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланнипе тачӑ ҫыхӑнса тӑни массӑсен ӗҫри активлӑхне ӳстерекен, вӗсен обществӑллӑ интересӗсене аталантаракан иксӗлми вӑй пулса тӑрать.

Социализм этемлӗх историйӗнче малтанхи хут ӗҫҫыннисен обществӑллӑ интересӗсене харпӑр хӑй интересӗсемпе ҫыхӑнтарать. Социализм принципӗ: кашниччен—унӑн пултарулӑхне кура, кашнине—унӑн ӗҫне кура текен принцип общество интересӗсемпе кашни ӗҫҫынни интересӗсене тӗрӗс ҫыхӑнтарса тӑрать.

Социализмла ӗҫ тата обществӑллӑ ӗҫе социализмла организацилени социализмӑн ҫак тӗп принципӗ ҫинче тытӑнса тӑрать. Большевиксен партийӗн историри мухтава тивӗҫлӗ ӗҫе ҫакӑнта пулать: вӑл, воспитани ӗҫне анлӑн туса пырса, миллионшар совет ҫыннисене обществӑллӑ интерессене тарӑн ӑнланса илме пулӑшрӗ, харпӑр хӑй интересӗсемпе обществӑллӑ интерессем уйрӑлми тачӑ ҫыхӑнса тӑнине кӑтартса пачӗ.

Продуктсене ӗҫлени тӑрӑх валеҫмелли принцип ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерет, ӗҫлеме хавхалантарать, ӗҫҫыннисен квалификацине ӳстерме пулӑшать, ӗҫ ҫине, общество харпӑрлӑхӗ ҫине, государство ҫине коммунистла пӑхма вӗрентет. Ҫавӑнпа та хуларипе ялти совет ҫыннисем перекетлӗхшӗн, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетессишӗн кӗрешни пӗтӗм государствӑна усӑ кӳнине тӗплӗ ӑнланса ӗҫлеҫҫӗ.

Социализмӑн тӗп принципне пурнӑҫа кӗртсе пыни ӗҫ хисепӗпе ӗҫленӗшӗн тӳлемелли хисепе государство енчен ҫирӗп контроль туса пымаллине пӗлтерет, тесе вӗрентнӗ В. И. Ленин. Ҫавӑнпа та большевиксен партийӗ ӗҫпе ӗҫ укҫине нормӑлас, колхозсенче тупӑшсене валеҫес, ӗҫре ҫӗнӗ дисциплина тӑвас, социализмлӑ ӑмӑрту организацилес ыйтусем ҫине ялан тимлӗ пӑхнӑ, халӗ те тимлӗ пӑхать.

V.

Кашни общество стройӗн хӑйӗн ӗҫ дисциплини пур,—тесе вӗрентнӗ Ленин,—«...кирек мӗнле ҫӗнӗ общество йӗркинче те ҫынсем хушшинче ҫӗнӗ ҫыхӑнусем, ҫӗнӗ дисциплина пулмалла» (Соч., 27 т., 475 стр.). Владимир Ильич ҫакна пӗр хут ҫеҫ мар кӑтартса панӑ: ҫӗнӗ дисциплина вӑл ырӑ ӗмӗтсенчен ҫеҫ пулса тӑмасть, производствӑн социализмла меслечӗ, производствӑри социализмлӑ ҫыхӑнусем, эксплуатацирен ирӗклӗ ӗҫ—ҫакӑ пулать ӗнтӗ ҫӗнӗ, социализмлӑ дисциплинӑн материальнӑй никӗсӗ.

Пирӗн парти яланах ҫынсене ӗҫре социализмлӑ дисциплина тытса пыма вӗрентсе пынӑ, халӗ те вӗрентсе пырать.

Парти ӗҫҫыннисене хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплинӑпа организацилӗх [illegible]лӗхне кӑтартса парать. Ленин ӗҫ [illegible] тытса пыма вӗрентмелли майсем ҫинчен каласа, ӳкетлӗнине хистени тачӑ ҫыхӑнса тӑма кирлине кӑтартса панӑ. «...Этемлӗх историйӗнчи аслӑ улшӑну—пусмӑрти ӗҫрен хамӑршӑн ӗҫлеме куҫни кӑлтӑксӑр, йывӑрлӑхс[illegible] хирӗҫӳсӗр, киревсӗр харампырсем[illegible] вӗсен хӳрешкисене пусармасӑр пулса иртмест» (Соч., 26 т., 368 стр.).

Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче ҫӗнӗ ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе пирӗн халӑх пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. «Организациленӗ тата дисциплинӑллӑ ҫынсем, граждан тивӗҫне туйса тӑракансем ытларах та ытларах пулса пыраҫҫӗ» (И. В. Сталин. Совет Союзӗн Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫи, 62—63 стр.).

Ӗҫре коммунистла дисциплина тытса пыма вӗрентни халӗ те совет обществине малалла аталанма чи кирлӗ услови пулса тӑрать.

Ӗҫре пур енчен те дисциплинӑллӑ пулассишӗн кӗрешесси ӗҫе кая юлса тухнипе, прогулсем тунине пӗтерессишӗн, колхозсенче ӗҫкунӗсен минимумне тултарассишӗн кӗрешнине ҫеҫ пӗлтермест. Кашни ӗҫ кунӗпе, ӗҫре кашни сехетпе, кашни минутпа тухӑҫлӑ усӑ курассишӗн кӗрешмелле.

VI.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗрмаях ӳстерсе пымалли хӑватлӑ вӑй социализмлӑ ӑмӑрту пулса тӑрать, тесе вӗрентнӗ В. И. Ленин.

Буржуалла конкуренци апостолӗсем конкуренцие «пулма пултаракан пӗртен-пӗр» ӑмӑрту форми тесе «вӗрентнине» тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, Ленин ҫапла кӑтартса панӑ: «социализм ӑмӑртӑва сӳнтерсе лартмасть кӑна мар, пачах урӑхла, вӑл унпа малтанхи хут чӑн-чӑнах анлӑн, чӑн-чӑнах массӑллӑн усӑ курма май парать» (Соч., 26 т., 4-мӗш изд., 367 стр.).

В. И. Ленин ҫапла каланӑ: Совет влаҫӗн условийӗсенче ӑмӑрту ӗҫҫыннисене хӑйсен вӑйне кӑтартма, хӑйсен пултарулӑхне сарса яма, талантсене ӳсме май парать, халӑхра вӑл талантсем ҫав тери нумай, капитализм ҫав пиншер, миллионшар талантсене таптаса, пусарса, пӑвса тӑнӑ.

Коммунистла субботниксенчен пуҫланса кайса, аслӑ ӑмӑрту совет обществине малалла илсе пыракан хӑватлӑ вӑй пулса тӑнӗ. Социализмпа ӑмӑрту пӗр-пӗрипе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Социализмлӑ ӑмӑртура совет ҫыннин ҫӗнӗ пахалӑхӗ палӑрса тӑрать.

Ленин социализмлӑ ӑмӑрту ҫинчен каланӑ шухӑшсене малалла аталантарса, Сталин юлташ ӑмӑрту строительствӑн коммунистла меслечӗ, массӑсен ӗҫри революциллӗ самокритики пулса тӑнине, вӑл самокритика миллионшар ӗҫҫыннисен творчествӑллӑ пуҫарулӑхӗнчен килнине кӑтартса пачӗ. «...Миллионлӑ массӑсен ӗҫри ҫӗкленӗвӗпе ӗҫри хавасланӑхӗ кӑна ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗрмаях малалла ӳстерсе пыма пултараҫҫӗ, унсӑрӑн социализм капитализма татӑклӑнах ҫӗнтересси ҫинчен шутламалли те ҫук» (Ленинизм ыйтӑвӗсем, 11-мӗш изд., 265 стр.).

Сталин юлташ ӑмӑртӑвӑн чи паха енӗ тесе ӑмӑрту ҫынсем ӗҫ ҫине мӗнле пӑхнине тӗпренех улӑштарнине шутлать, мӗншӗн тесен ӑмӑрту ӗҫе, ӗлӗк ылханлӑ та йывӑр пусмӑр пулнӑ ӗҫе, хисеплӗ ӗҫ, мухтавлӑ ӗҫ, хастарлӑхпа паттӑрлӑх ӗҫӗ туса хурать.

Ленин—Сталин партийӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва, малта пыракансен опытне сарассишӗн куллен тӑрӑшнипе пула социализмлӑ ӑмӑрту пӗрмаях вӑйланса пырать, вӑл ҫӳлӗрен ҫӳлӗ формӑсене куҫса, ӗҫҫынни массисене ытларах та ытларах ҫавӑрса илет.

Малтанхи коммунистла субботниксенчен пуҫланнӑ ӑмӑрту Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту пулса тӑчӗ—ҫавӑн пек ӗнтӗ социализмлӑ ӑмӑрту аталанса пынин, ӗҫ ҫине коммунистла пӑхни аталанса пынин мухтавлӑ ҫулӗ. Халӗ мӗнпур рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служащисен 90 проценчӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ, социализмлӑ ӑмӑрту халӗ чӑн-чӑн халӑх юхӑмӗ пулса тӑчӗ.

Социализмлӑ ӑмӑрту аталанӑвӗнчи чи ҫӳллӗ тапхӑр стахановла юхӑм пулса тӑрать, вӑл ку чухнехи чи пурнӑҫлӑ, никам ҫӗнтерейми юхӑм, унӑн пӗлтерӗшӗпе тымарӗсене Сталин юлташ уҫҫӑн кӑтартса пачӗ. Социализм ҫӗнтерни, эксплуатацие пӗтерни, ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланни, ҫӗнӗ техника тата ҫав техникӑна алла илнӗ ҫӗнӗ ҫынсем пулса тӑни—ҫаксем пулаҫҫӗ ӗнтӗ стахановла юхӑмӑн тымарӗсем.

Стахановла юхӑмӑн историллӗ пӗлтерӗшӗ ҫинчен Сталин юлташ ҫапла калать: «...вӑл пире социализмран коммунизма куҫма кирлӗ ӗҫ тухӑҫлӑхӗн ҫӳлӗ виҫисене ҫитме ҫул уҫса парать» (Ленинизм ыйтӑвӗсем, 11-мӗш изд., 496 стр.).

Ҫавӑнпа ӗнтӗ Сталин юлташ стахановецсене ӗҫри революционерсем тет, мӗншӗн тесен стахановла юхӑм вӑл—новаторсен революциллӗ юхӑмӗ, вӑл совет ҫыннисене хаклӑ пахалӑх—ҫӗннишӗн кӗрешес туйӑм парать. Социализмлӑ ӑмӑртура чӗрӗ вӑй парса тӑракан совет патриотизмӗ, Тӑван ҫӗршыва юратни палӑрса тӑрать.

Социализмран майӗпен коммунизма куҫнӑ тапхӑрта совет ҫыннисем татах та лайӑхрах ӗҫлени, хӑйсен ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗрмаях ӳстерсе пыни кирлӗ. «Ку халӗ чи кирли. Вӑл пире юлашкинчен икӗ системӑн—социализм системипе капитализм системин аслӑ ӑмӑртӑвӗнче ҫӗнтерӳ тума май парать» (Г. М. Маленков. Суйлавҫӑсен пухӑвӗнче каланӑ сӑмах, 1950 ҫул, 19 стр.).

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗн пӗтӗм результачӗпе хисепӗ чи малта пыракансенчен мар, пӗтӗм ӗҫҫыннисен массинчен, вӗсене малта пыракансен шайне ҫитернинчен килет. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи социализмлӑ ӑмӑртури ҫӗнӗ тапхӑр вӑл коллективлӑ стахановла ӗҫ пулса тӑрать, ҫакӑ вара мӗнпур ӗҫҫыннисене малта пыракансен шайне ҫитерме май парать.

Пӗтӗм тӗнчери миршӗн, коммунизм тӑвассишӗн кӗрешсе, совет ҫыннисем стахановла ӗҫӗн ҫӗнӗрен ҫӗнӗ, лайӑхрах меслечӗсемпе усӑ кураҫҫӗ. Мускаври «Буревестник» ятлӑ фабрикӑри стахановецсем М. Левченкӑпа Г. Муханов производствӑри кашни операцире продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетес ӗҫе пуҫласа ячӗҫ. Люблинӑри литейно-механически заводри токарьсем А. Жандаровӑпа О. Агафонова, А. Чутких пуҫарӑвне малалла аталантарса, производствӑри кашни операцие чи лайӑх пахалӑхпа тӑвассишӗн ӑмӑрту пуҫларӗҫ. Свердловскри новаторсен ушкӑнӗ, стахановла опытпа пур ӗҫре те усӑ курса, продукцин пӗр единицине тума кирлӗ ӗҫе чакарассишӗн ӑмӑртма тытӑнчӗҫ. Горькири Молотов ячӗпе тӑракан автозаводри паллӑ тимӗрҫӗсем А. Загорныйпа Ф. Катаев производствӑри кашни операцие каякан ӗҫе чакарассишӗн ӑмӑрту пуҫларӗҫ. Ҫӗршыври паллӑ трактористсем 1952 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн ӑмӑрту пуҫласа ячӗҫ. Ҫаксем пурте В. И. Ленин кӑтартса панӑ коммунистла ӗҫ пирӗн кулленхи пурнӑҫа ытларах та ытларах кӗрсе пынине пӗлтереҫҫӗ, ӗҫҫыннисем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, кашни пӑт тырра, ҫӗр кӑмрӑкне, тимӗре харпӑр хӑйшӗн мар, пӗтӗм обществӑшӑн перекетлесе хӑварма тӑрӑшаҫҫӗ.

Малта пыракан миллионшар совет ҫыннисемшӗн ӗҫ пурнӑҫра чи кирли пулса тӑчӗ. Совет халӑхӗн аслӑ ҫулпуҫӗ тата учителӗ Сталин юлташ коммунизм тӑвакансене пурне те аслӑ Ленин вӗрентнӗ пек ӗҫлеме чӗнет.

А. ФЕДОРОВА.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

*

Ленин кунĕсем Румынире

БУХАРЕСТ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири предприятисенче, учрежденисенче, культура çурчĕсенче, машина-трактор станцийĕсенче, государствăн ялти хуçалăхĕсенче тата коллективлă хуçалăхсенче ĕçсынписен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Пухусенче В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен, этемлĕх генийĕсен В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен лекцисемпе докладсем итлеççĕ.

Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн Бухарестри çуртĕнче тата культура çурчĕсенче организациленĕ литература вечерĕсенче В. И. Ленинпа И. В. Сталин çинчен çырнă литература произведенийĕсене ушкăнпа пухăнса вулаççĕ. Январĕн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕнче çĕршыври кинотеатрсенче пролетариатăн аслă учителĕн—В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ӳкернĕ кинофильмсене кăтартма хатĕрленеççĕ.

Бухарестри тата Румынири ытти хуласенчи нумай предприятисенче В. И. Ленина хисеплесе асăнса хурлăхлă чаплă ларусем ирттернĕ.

В. И. Ленин произведенийĕсене Болгарире тата Польшăра нумай пичетлесе кăлараççĕ

СОФИЯ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Этемлĕхĕн чи аслă генийĕн — В. И. Ленинăн произведенийĕсене Болгари Халăх Республикинче нумай пичетлесе кăлараççĕ. Халĕ В. И. Ленин произведенийĕсене Болгарири чи инçетри вырăнсенче те пĕлеççĕ.

В. И. Ленинăн произведенийĕсене болгар чĕлхипе малтанхи хут 1919 çулта, София хулинче пичетлесе кăларнă. Болгарири коммунистсемпе малта пыракан рабочисем В. И. Ленинăн «Государство тата революци» ятлă кĕнеки пек произведенийĕсемпе ун чухнех паллашма пултарнă. 1923 çулччен Болгарире Ленинăн 13 произведенине пичетлесе кăларнă.

1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнченпе—Болгарие монархиллĕ-фашистла влаçран хăтарнă кунранпа В. И. Ленин произведенийĕсене нумай пичетлесе кăларма тытăннă. Çичĕ çул хушшинче В. И. Ленин произведенийĕсене пĕтĕмпе 1 миллион та 569 пин экземпляр пичетленĕ.

Хальхи вăхăтра В. И. Ленин Сочиненийĕсен тăваттăмĕш изданине болгарла куçараççĕ. Паянхи куна 15 том пичетленĕ. Кăçал Сочиненисен 11 томне пичетлесе кăларма палăртнă. Çак изданин пĕтĕм тиражĕ 700 пин экземпляр пулать.

* * *

ВАРШАВА, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки ултă çул çурă хушшинче Польшăра В. И. Ленинăн 50 ытла произведенине пичетлесе кăларнă, вĕсен пĕтĕм тиражĕ 7 миллион та 500 пин экземпляра яхăн.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен 1, 2, 5, 14, 20, 21, 22 тата 23-мĕш томĕсем пичетленсе тухнă, çывăх кунсенчех Сочиненисен 25-мĕш томĕ пичетленсе тухать.

«Книга и знание» издательство кăçал В. И. Ленин Сочиненийĕсен тепĕр 7 томне тата «Ленинпа Сталин партии строительстви çинчен» ятлă икĕ томлă кĕнеке пичетлесе кăларма палăртнă.

Монголи халăхĕ В. И. Ленина хисеплесе асăнать

УЛАН-БАТОР, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсынписемпе пĕрле, большевиксен паттăр партине тата тĕнчери пĕрремĕш Советлă Социализмлă Республикăна туса хунă аслă çулпуçа тата учителе Владимир Ильич Ленина чунтан-чĕререн хисеплесе асăнать. Монголи Халăх Республикин столицинче—Улан-Баторта тата ытти хуласемпе ялсенче Ленин кунĕсене ирттерме хатĕрленес ĕç анлă сарăлнă. Предприятисенче, организацисенче, шкулсенче, клубсенче, хĕрлĕ кĕтессенче тата ялта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем хушшинче пиншер агитаторсемпе пропагандистсем Владимир Ильич Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласусем тата лекцисем ирттереççĕ. Юлашки кунсенче республика столицинчи 10 пин ĕçсынни ытла «Владимир Ильич Ленин—пĕтĕм тĕнчери ĕçсынписен гениллĕ çулпуçĕпе учителĕ» темăпа вуланă лекцисене итленĕ.

Столицăри шкулсенче Ленинăн уйрăм произведенийĕсем тăрăх конференцисем, клубсенче тата чылай шкулсенче Ленина асăнса литература вечерĕсем ирттерме палăртнă.

Государствăн Сталин ячĕпе тăракан университетĕнче Ленин произведенийĕсен вырăсла, монголла, китайла тата казахла пичетленсе тухнă кĕнекисен выставкине тунă.

Ленин кунĕсенче столицăри кинотеатрсенче «Ленин в Октябре», «Ленин в 1918 году», «Владимир Ильич Ленин» кинофильмсене тата ытти картинăсене кăтартма хатĕрленеççĕ.

Китай журналĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни çинчен пичетленĕ статья

ШАНХАЙ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Гунжонь» («Рабочий») журналăн иккĕмĕш номерĕнче «Ленин пирĕн чĕресенче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ» ятлă статья пичетленĕ.

Статьяра çапла каланă: 1924 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче хăйĕн пĕтĕм вăйне тата пĕтĕм пурнăçне революци ĕçне панă аслă çулпуç вилнĕ. Пирĕн пурин те тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре Ленин пек çирĕп пулма, революци ĕçне, рабочи класс интересĕсене Ленин пекех шанчăклăн пурнăçласа пыма вĕренес пулать. Ленин вилнĕ, анчах унăн ĕçĕ, вăл мĕншĕн кĕрешнĕ, çав ĕç, Ленинăн революциллĕ шухăшĕ пĕтĕм тĕнчери миллионшар ĕçсынписен чĕрисенче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Канвон провинцийĕнчи халăх В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине палăртать

ПХЕНЬЯН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Канвон провинцийĕнчи пур районсенче те пĕтĕм тĕнчери ĕçсынписен аслă учителĕ тата большевиксен партине организацилекенĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине палăртаççĕ.

Провинцири предприятисенче «Ленинизм теорийĕ—миллионшар ĕçсынни массисен ними çĕнтерейми вăйĕ» темăпа лекцисем ирттернĕ, предприятисен пур цехĕсемпе бригадисенче те «Ленин—пĕтĕм тĕнчери ĕçсынписен учителĕ», «Ленин тата рабочисем», «Ленин тата хресченсем» ятлă темăсемпе каласусем ирттереççĕ.

В. И. Ленин пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллаштаракан выставка тунă, ăна ялан лăхах уçнă.

Вонсан хулинче тата унăн çывăхĕнчи ялсенче В. И. Ленин пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллаштаракан, куçарса çӳремелли выставкăсем тăваççĕ.

*

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Ливанри паллă общественнăй деятеле тытса хупнă

БЕЙРУТ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 16-мĕшĕнче каçхине Ливан полицийĕ Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членне, Ливанри паллă прогрессивнăй общественнăй деятеле—Антуан Табета тытса хупнă.

«Ал-Шарк» хаçат Антуан Табета Америка летчикĕ Ливана пропаганда сарас шутпа пынине хирĕç халăх протестленĕ пирки тытса хупни çинчен çырать.

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

США тата Атлантика блокĕнчи ытти çĕршывсем хăйсем тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене сирсе ярасшăн мар тата васкасах хĕçпăшалланассине чарса лартасшăн мар пулнине тепĕр хут кăтартса панă

А. Я. Вышинский сăмахĕ

ПАРИЖ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Политика комитечĕн паян кăнтăрла пулнă ларăвĕнче СССР делегацийĕ «Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» панă сĕнӳсене сӳтсе явас ĕç вĕçленнĕ.

Совет делегацийĕн сĕнĕвĕсем США делегацине тата ООН-ри агрессиллĕ ушкăна кĕрекен ытти çĕршывсен делегацийĕсене питех те кăмăла кайман, вĕсем асăннă сĕнӳсене сӳтсе явма парас мар тесе хытă тăрăшнă. Совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене мĕнпур çĕршывсен халăх массисем хытă ырланă. Çавăнпа та ООН-ри агрессиллĕ ушкăнра тăракансем Совет Союзĕн мирлĕ пурнăç тумалли программи çинчен нимĕн шарламасăр тăма хăтланни ăнăçсăр пулнă.

Политика комитетĕнче Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене сӳтсе явма нумай делегацисем хутшăннă. Прениссем пынă вăхăтра Америка лагерĕнчи çĕршывсен представителĕсем совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене тĕплĕ сӳтсе явассинчен пăрăнма хăтланнă. Дискуссисем вăхăтĕнче пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ çул-йĕр, политикăллă икĕ çулйĕр уйрăмах уçăмлă палăрнă: пĕр çулйĕрĕ—вăл тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене сирсе ярасси тата пур халăхсене те мирлĕ пурнăçра ĕçлесе пурăнасси патне илсе пыракан çул-йĕр, ăна Совет Союзĕ тата империализма хирĕçле демократиллĕ лагерьти ытти çĕршывсем тытса пыраççĕ, тепĕр çул-йĕр—вăл тĕнчери çĕнĕ вăрçа хатĕрлемелли çул-йĕр, ку çулйĕрпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсене пăхăнса тăракан çĕршывсем пыраççĕ, вĕсем тĕнчери çĕнĕ вăрçа хатĕрлес ĕçе пурнăçлама тăрăшаççĕ.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский пысăк тата пурте ĕненмелле сăмах тухса каланипе Политика комитетĕнчи дискуссин итогне тунă. Вышинский сăмах тухса каласси çинчен ĕнерех пĕлтересе хунă пулнă. Вăл тухса каласси не сессие пухăннă делегатсем, журналистсем тата Ассамблея ларăвĕсене çӳрекен халăх питĕ хытă интересленсе кĕтнĕ. Комитет ларăвĕн залĕнче халăх тулличех пулнă. Совет делегацийĕн пуçлăхĕ икĕ сехет хушши каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Америкăпа Англи блокĕ агрессиллĕ ĕçсем тума шутланине тăрă шыв çине кăларнă. Совет Союзĕ сĕннĕ уçăмлă та конкретнăй программăна йышăннипе вăрçă пуçланассине сирсе яма чĕннĕ. Вăл питĕ хĕрӳллĕ тата ĕненмелле каланă.

Совет Союзĕн сĕнĕвĕсенчи кашни пункт пирки Вышинский тĕплĕ каласа панă, Америкăн агрессиллĕ лагерĕнчи çĕршывсен представителĕсем совет сĕнĕвĕсене хирĕç каланисене тата вĕсем кăларса тăратнă сăлтавсене пур енчен те тĕплĕ тишкерсе тухнă. Çав представительсем пĕр кавар туни, СССР делегацийĕ тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярассине тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетессине пурнăçлас тĕлĕшпе сĕннĕ резолюци проектне тĕплĕн сӳтсе явас мар тесе каласса татăлни, вĕсем мĕн каланинчен, мĕнле каланинчен тата малтанах хăйсем хушшинче рольсене валеçсе тухнинчен лайăх курăнать, вĕсене тăрă шыв çине кăларать, тенĕ вăл.

Çавăн пек кавар тунине пула,—тенĕ Вышинский,—хăшпĕр делегатсем Совет Союзĕ çинчен юриех шухăшласа кăларнă элеклĕ сăмахсене пĕрин хыççăн тепри темиçе хутчен те, йăлăхтарса ситеричченех каларĕç. Çавăн пек хăтланса, вĕсем шыва хытăрах пăтратма тăрăшрĕç, пăтранчăк шывра пулă тытма сăмăлрах ĕнтĕ. Вĕсем çавăн пек хăтланнипе тĕп ыйтусене сӳтсе явассинчен пăрăнма çăмăлрах пулать тесе шутларĕç. Вĕсем ыйтăва тĕрĕс мар çутатнипе, унтан та ытларах—фактсене пăснипе общественноçа ултала ма хăтланчĕç.

ООН-ра агрессиллĕ ушкăн пулса тăракан çĕршывсен представителĕсем хăйсем совет сĕнĕвĕсене—тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене чăннипех те сирсе яма тата мирлĕ пурнăç тума май паракан сĕнӳсене йышăнма килĕшменнине пытарса тăрас шутпа Совет Союзне хирĕç юриех шухăшласа кăларнă питĕ киревсĕр элексене, халап-юмахсене, вĕсем суя сăмахсем пулнине СССР делегацийĕн пуçлăхĕ пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларнă. США, Англи, Франци делегацийĕсем тата Америкăпа Англи блокĕнче тăракан ытти çĕршывсен делегацийĕсем Генеральнăй Ассамблейăна Совет Союзĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартма, хĕçпăшалсене сахаллатма тата çав ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан контроль тума сĕннисене тĕплĕн сӳтсе явма тата вĕсем тăрăх решени йышăнма чăрмантарас шутпа юриех шухăшласа кăларнă, çав ĕçре усă курнă, пĕтĕмпех суя сăлтавсене пурне те Совет делегацийĕн пуçлăхĕ тăрă шыв çине кăларнă.

Совет делегацийĕн чăннипех те мирлĕ пурнăç тумалли программа пулса тăракан сĕнĕвĕсене йышăнни тата çав программăна мире юратакан пур государствăсем те яланах пурнăçласа пыни тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярассине, халăхсем хушшинчи мирпе туслăха çирĕплететессине пирĕн делегаци хытă шанать, тенĕ юлашкинчен Вышинский.

Вышинский сăмах тухса каланă хыççăн председатель дискусси вĕçленни çинчен, комитетăн сасăлама тытăнмалли çинчен пĕлтернĕ.

США, Англи тата Франци представителĕсем дискусси пынă вăхăтра хăйсене итлекен делегацисене Совет Союзĕн резолюци проектĕнчи çак пунктсене: Атлантика блокне хутшăнни тата ют çĕршывсен территорийĕсенче çар базисем туни ООН членĕ пулнипе килĕшӳллĕ мар тесе калакан пĕррмĕш пункта, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелемелли çинчен калакан иккĕмĕш пункта тата пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тумалла текен саккăрмĕш пункта сирсе яма чĕннĕ.

США, Англи тата Франци делегацийĕсем Совет Союзĕн сĕнĕвĕсенчи 3, 4, 5, 6 тата 7-мĕш пунктсене—атомлă хĕçпăшала чарса лартма, пилĕк аслă державăн хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсене чакарма тата çав ĕçсене пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăракан тĕнчери çирĕп контроль тума палăртакан пунктсене уçăнах сирсе яма хăяйман. Вара вĕсем маневрсем тума тытăннă. Вĕсем пурте пĕрле резолюци проекчĕ тăратнă, унта совет делегацийĕн халĕ асăннă сĕнĕвĕсем пирки комитетра решени йышăнмалла мар, вĕсене хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие памалла, тесе каланă.

Ку резолюцие вĕсем совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене пăчлантарса лартас шутпа тăратнă. Делегацисен ытларахăшне çав резолюцишĕн сасăлаттарма США делегацийĕн тĕрлĕ жуликла ĕçсем тумалла тата хытă хĕсмелле пулать тесе Францири буржуалла хаçатсем малтанах çырнă. США делегачĕ Гросс ĕнер тухса каланă сăмах та, хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие темĕнле çĕнĕ сĕнӳсем тăратасси çинчен калани те çавăн пек жуликла ĕç туни пулать тесе хăшпĕр хаçатсем çыраççĕ. «Фран тирер» хаçат та, Америкăри влаçра тăракан ушкăнсем хушнисене Францире туса тăраканскер, Гроссăн ĕнерхи заявленине маневр туни тесе шутлать. СССР делегацийĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартас, хĕçпăшалсене чакарас тата контроль органĕ туса хурас ыйтупа килĕшӳ тăвас ĕçе сăмăллатас шутпа хăйĕн сĕнĕвĕсене кĕртнĕ улшăнусене, «Вышинскин çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă формулисене арабсен çĕршывĕсен тата Азири çĕршывсен делегачĕсем ырланине Америка делегацийĕ тавраşĕнчи çынсем шута илмесĕр тăма пултарайман», çавăнпа та вĕсем тĕрлĕ маневрсем тума тытăннă, тесе çырать «Фран тирер» хаçат. Ку сĕнӳсене «нимĕнле сăлтавсем те кăларса тăратмасăр хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие пама чĕнни хĕвеланăçĕнчи державăсен представителĕсем чăннипе мĕн тума шутланă пирки иккĕлентерме пултарать», тесе çырнă малалла хаçат.

Акă мĕншĕн США делегацийĕ, 3, 4, 5, 6 тата 7-мĕш пунктсене сасăлама тăратма хăраса, чи малтан США, Англи тата Франци тăратнă резолюцие, совет делегацийĕн резолюци проектĕнчи халĕ асăннă пунктсене хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие парасси çинчен калакансkерне, сасăлаттарас пирки çине тăнă, США делегацийĕ хушнине итлекенсем пулăшнипе çав резолюцие йышăннă.

Çав резолюци проектне США делегацийĕ комитетра йышăнтарнă хыççăн, Политика комитечĕ Совет Союзĕн сĕнĕвĕсен 1, 2 тата 8-мĕш пункчĕсене сасăлама тытăннă. Америкăпа Англи блокĕнчи çĕршывсен делегацийĕсем çав пунктсене йышăнассине хирĕç сасăланă. Çапла вара, комитет çав пунктсене сирсе янă. Анчах чылай делегацисем США, Англи тата Франци позицийĕсене хӳтĕлеме килĕшмен. Уйрăм пунктсене сасăланă чухне Америкăпа Англи блокĕ майлă пулманнисен хисепĕ 12 делегацирен пуçласа 24 делегаци таран пулнă. Совет Союзĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тума сĕннине йышăнассишĕн 11 делегаци (çав шутра СССР, Украина, Белоруссия, Польша, Чехословаки, Египет, Бирма, Сауловски Арави, Сири делегацийĕсем) сасăланă. Нихăш майлă та сасăламаннисем 13 делегаци пулнă (Эквадор, Эфиопи, Инди, Индонези, Иран, Ирак, Ливан, Уругвай, Аргентина, Гондурас, Либери, Пакистан тата Мексика делегацийĕсем). Совет Союзĕн çак сĕнĕвне сирсе ярас ĕçре США делегацийĕ аран-аран сасăсен çуррринчен пăртак ытларах кăна (35 сасă) пухма пултарнă.

Çакăнпа Совет Союзĕ «Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетмелли ĕçсем çинчен» панă сĕнӳсене сӳтсе явас ĕç вĕçленнĕ. Ку ыйтăва сӳтсе явнин итогĕ уççăнах палăрса тăрать. Ăна сӳтсе явни пур çынсене те, США-н чăн-чăн политики пирки пăртак кăна иккĕленнĕ çынсене те, çав политика тĕнчери çĕнĕ вăрçă патне илсе пынине тепĕр хут кăтартса пачĕ. Çавăнпа пĕрлех ку ыйтусене сӳтсе явни пĕтĕм тĕнче умĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ хăйĕн пархатарлă ĕçне—миршĕн, халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн, тĕнчери халăхсем пĕр-пĕрин хушшинче тӳрĕ кăмăлпа килĕштерсе пурăнмалла тăвассишĕн кĕрешес ĕçне малалла туса пыма çирĕп шухăш тытнине кăтартса пачĕ.

Председатель Политика комитечĕ ыранхи ларура кун йĕркинчи тепĕр пункта — Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илесси çинчен сӳтсе явма тытăнасси çинчен пĕлтернĕ.

Хăрушсăрлăх советĕнче

ПАРИЖ, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвĕ пулнă, унта Кашмир пирки тăракан ыйтăва пăхса тухнă. Индипе Пакистан пĕр-пĕринпе Кашмир пирки темиçе çул ĕнтĕ тавлашаççĕ. Вĕсем тавлашнипе усă курса, Англипе США хăйсен агрессиллĕ планĕсене пурнăçлама, Кашмиртан хăйсен çар бази—Совет Союзне тапăнас ĕçре усă курмалли база туса хума тăрăшаççĕ. Индипе Пакистан хушшинчи тавлашăва йĕркелес ĕçре вĕсене пулăшма «ООН представительне» янă. Çав представитель—Грэхэм американец. Паян Грэхэм тавлашакан енĕсене «çураçтарма» хăй мĕнле ĕçсем туни çинчен иккĕмĕш доклад тăратнă. Хăйĕн пĕррмĕш докладне Грэхэм тахçанах ĕнтĕ Хăрушсăрлăх Советне тăратнăччĕ, çавăн чухнех Грэхэм нимĕнле усăллă ĕç те тăвайманнине, çав çĕршывсем хушшинчи тавлашăва йĕркелеме нимĕн чухлĕ те пулăшма пултарайманнине палăртнăччĕ. Çапах та США-па Англи çине тăнипе Грэхэма ку енĕпе малалла «ĕçлеме» хушас тесе решени йышăннăччĕ. Грэхэмăн ирĕксĕрех хăйĕн иккĕмĕш докладĕнче те Индипе Пакистан хушшинчи тавлашăва «йĕркелеме» тăрăшни анăçсăр пулни çинчен тепĕр хут пĕлтерме тивнĕ.

Америка Индипе Пакистан хушшинчи тавлашăва йĕркелес ĕçре пулăшма янă çын чăннипе мĕн тума тăрăшни тата США-па Англин Кашмир пирки тунă планĕсем чăннипе мĕншĕн пулланса ларни çинчен паян СССР представителĕ Я. А. Малик каласа панă.

Совет делегацийĕ Кашмир пирки тăракан ыйтăва мĕнле йĕркелемелли çинчен панă сĕнĕве Кашмирта та, Индипе Пакистанра та, мирлĕ пурнăç тума тăрăшакан халăхсем хапăл туса йышăнĕç. Анчах совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратнă хыççăн Англипе Америка представителĕсем пăтрашса ӳкнĕ, нимĕн тума аптранă. Англи представителĕ Джебб хăйĕн сăмахĕнче Грэхэма никам та пăшăрханма пултарайман ĕçсем тума хушнă пек кăтартма хăтланнă. Вăл ССР Союзне хирĕç киревсĕр сăмахсем каланă, юлашкинчен вара пĕр тăхтаса тăмасăр ларăва хупма сĕннĕ. Çавăн чухне Джебб вара Грэхэм докладне лайăх тĕпчесе вĕренес пулать, çавăнпа халĕ ларăва хупмалла, тенĕ. Ку сĕнĕве США представителĕ ырланă.

Вĕсене хирĕç кĕскен каласа, Я. А. Малик çакна палăртнă: совет делегацийĕн заявленийĕнчи пĕр факт пирки те Англи представителĕ хирĕç калаймарĕ, çав фактсенчен пĕрне те сирсе яма пултараймарĕ. Çавăнпа та унăн ирĕксĕрех тĕрлĕ суя халапсем шухăшласа кăлармалла пулчĕ, тенĕ.

Çакăнпа Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвĕ хупăннă.

США Канадăна сутăн илет

ОТТАВА, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Канада экономика тĕлĕшпе Америкăн çар хуçалăхĕ пулса тăрасси тата политика тĕлĕшĕнчен Пĕрлешӳллĕ Штатсене пăхăнса тăрасси ӳссе пырать. Çавна пула Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Канадăна США çумне тӳрремĕнех пĕрлештерме шутлакансем нумайланаççĕ. Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсен представительсен палатин членĕ Шиан «Канадăна Пĕрлешӳллĕ Штатсен аллине çавăрса илес» е Канадăна Англирен сутăн илес майсене тĕпчесе вĕренме 5 сенатортан тата представительсен палатин 5 членĕнчен ятарласа комитет тăвасси çинчен конгреса закон проекчĕ тăратнă.

Комитетăн Канадăна Пĕрлешӳллĕ Штатсем çумне штатсен ушкăнĕ шутласа е пĕтĕмĕшле территори шутласа пĕрлештерес ыйтăва тĕпчесе вĕренмелле. Закон проектĕнче Англин хăйĕн Канадăри прависемпе интересĕсене Пĕрлешӳллĕ Штатсене памалла, çапла майпа Англин Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тĕнчери пĕррмĕшпе иккĕмĕш вăрçăсем вăхăтĕнче, Маршалл планĕ тăрăх кивçен илнĕ укçана тата американецсем кăçал пама пулнă кивçен укçана тӳлесе татмалла, тенĕ.

Мосаддык заявленийĕ

ПРАГА, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Телепресс агентстви Иран премьер-министрĕ Мосаддык миршĕн тăракансен Египетри комитетне тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн генеральнăй секретарĕпе—Юсуф Хельмипе мĕн калаçни çинчен пĕлтернĕ.

Вĕсем мĕн калаçни çинчен январĕн 9-мĕшĕнче Иранри миршĕн тăракансен «Маслахат» хаçатĕнче çырнă. Мосаддыка Хельми çакăн пек ыйту панă: Çитес вăхăтра Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи тата Сурçĕр Африкăри çĕршывсенчи миршĕн тăракансен конгресне пухпă пирки эсир мĕн шутлатăр, тенĕ. Мосаддык: «Çавăн пек конференцисем ирттерни яланах усăллă пулĕ, çавăн пек конгресс пухни, паллах ĕнтĕ, асăннă çĕршывсенчи халăхсен шухăшĕмĕчĕсене пурнăçлассинче пысăк пулăшу пани тата пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетме пулăшни пулĕччĕ», тесе каланă.

Англи империалисчĕсен Египетри агрессиллĕ ĕçĕсем

КАИР, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 16-мĕшĕнче Египетăн шалти ĕçсен министрĕн заявленине пичетлесе кăларнă. Унта ĕнер Англи çарĕсем Суэц каналĕ патĕнче Тель-эль-Кебир тата Хамада хулисене оккупацилени, Египет полицейскийĕсене тыткăна илни çинчен пĕлтернĕ.

Заявленире тата акăлчансем хăйсем йышăннă хуласене Египетăн ытти территорийĕнчен пĕтĕмпех уйăрни çинчен каланă.

«Аль-Мысри» хаçат асăннă хуласене тытса илнĕ çĕре Англин 5 пин салтакĕ, çав шутра парашютистсем, хутшăнни çинчен пĕлтерет. Англи салтакĕсен танксемпе пулеметсем пулнă. Англи салтакĕсем çуртсене ухтарнă чухне стариксене, хĕрарăмсене тата ачасене килĕсенчен хăваласа кăларнă.

Каирта чрезвычайнăй йĕрке туса хунă

КАИР, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Ахрам» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Каирта паянтан, ирхи 7 сехетрен пуçласа чрезвычайнăй лару-тăру чухнехи йĕрке туса хуни çинчен пĕлтернĕ.

Хаçат шалти ĕçсен министрĕ ĕнер столицăна сыхлас тĕлĕшпе çирĕп распоряженисем кăларни çинчен пĕлтерет.

РСФСР-та шахмат енĕпе мала тухассишĕн ирттерекен заочнăй турнир

Çывăх кунсенче РСФСР-та шахмат енĕпе мала тухассишĕн ирттерекен тăваттăмĕш заочнăй турнир пуçланать. Шупашкар хулинчи шахматистсен коллективĕ турнирăн активлă участникĕ шутланать.

Икĕ çул каярах хулари шахматистсем çак ăмăртăва «Б» класс шутĕнче хутшăнчĕç. Ăмăртура паллă çитĕнӳ тунă хыççăн, Шупашкар шахматисчĕсем «А» класа, мастерсен хисепне кĕçма тивĕçлĕ пулчĕç, Россия Федерацийĕнчи чаплă шахматистсен ретне тăчĕç.

Ку пысăк çитĕнӳ Чăваш республикинче физкультурăпа спорт ĕçĕ çултан çул аталанса пынине, халăх культури ӳснине кăтартса парать. Республикăра паллă шахматистсем ӳссе çитĕнчĕç, вĕсем çĕршыври тĕрлĕ хуласенчи пулакан ăмăртусене активлă хутшăнаççĕ.

Иртнĕ çулта Шупашкар шахматисчĕсем ăмăртăва «А» класс шутĕнче хутшăнчĕç, начар мар тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем Ивановăпа Сталинград хулисенчи паллă шахматистсемпе ăмăртса вылярĕç.

Ăмăртури ăнăçлăх коллектив членĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçленинчен те нумай килет. Заочнăй турнир спорт коллективĕсен дисциплинине ӳстерет, Россия Федерацийĕнчи хуласенчи шахмат организацийĕсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме пулăшать.

Шупашкар хулинчи шахматистсене çак кунсенче пуçланакан турнирта çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунăпăр.

К. ОГАНДЖАНЯН.
И. РОМАНОВ.

ВКЛАДЧИКСЕН ЙЫШĔ ӲСНĔ

ИШЛЕЙ. Районти перекет кассинче вкладчиксен йышĕ ӳссе пырать. Иртнĕ çулталăк хушшинче вкладчиксем çĕнĕрен нумай хутшăннă. Перекет касси вкладсем усрамалли çулталăк планне 108 процент ытла тултарнă.

Перекет касси заем вылявĕсем тăрăх 1951 çулта, 1950 çулта тӳленипе танлаштарсан, 63 пин тенкĕ ытла тӳленĕ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

Ĕçсынни депутачĕсен Сĕнтĕр район Совет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ РСФСР тата Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ, ВКП(б) членĕ

Матвей Иванович
БАГРОВ

вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01214 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.